24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
25
ШĂМАТКУН
20 (5735) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Суйлав кампанин ответлă тапхăрĕ

Шупашкар, Етĕрне тата Вăрмар округĕсенче СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне, çавăн пекех тата ĕççыни депутачĕсен выраннти Совечĕсене депутатсем суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен уйрăм округсенче суйлав кампанийĕ анлăн сарăлса пырать. Çав асăннă округсем тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем тăратас тĕлĕшпе ĕççыннисен пухăвĕсем пулса иртеççĕ. Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнчи рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем 496-мĕш номерлĕ Шупашкар суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн Иван Матвеевич Чарыков юлташăн кандидатурине тăратрĕç. Етĕрнери çу тата спирт завочĕсенчи рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ 506-мĕш номерлĕ Етĕрне суйлав округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине тăратрĕç. Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхоз членĕсен пухăвĕ Вăрмар округĕ тăрăх СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ЧАССР Шалти Ĕçсен Халăх Комиссарĕн С. Е. Белолипецкий юлташăн кандидатурине тăратрĕç. Чарыков, Павлов тата Белолипецкий юлташсем—çирĕп большевиксем, Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă, халăх тата коммунизм ĕçне чĕререн парăннă ывăлĕсем.

Ĕççынни депутачĕсен выраннти Совечĕсене депутата суйлама та рабочисен, колхозниксен, служащисен пухăвĕсем халăхăн чи шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсене, коммунизм ĕçĕшĕн пĕтĕм вăй-халне парса кĕрешме пултаракан çынсене тăратаççĕ.

Суйлав умĕнхи пухусем пысăк çĕкленӳпе, коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла хурçă пек çирĕп блокĕн чаплă çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешме пулнипе, Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тавра тата ытларах тачă пĕтĕçсе тăнипе иртеççĕ. Рабочисем, служащисем, совет интеллигенцийĕ, колхозниксемпе колхозницăсем суйлав кунне — февралĕн 16-мĕшне производствăллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе паллă тума тăрăшаççĕ, конкретлă обязательствăсем илеççĕ, социализмла парламента депутатсем суйламалли куна пысăк праçник вырăнне хурса хатĕрленеççĕ.

Халĕ, суйлав кампанин ответлă тапхăрне кĕнĕ вăхăтра, Шупашкар, Етĕрне тата Вăрмар суйлав округĕсене кĕрекен районсенчи парторганизацисен задачи нумай пысăкланать. Халĕ уйрăмăнах халăх хушшинче массăллă агитаци ĕçне вăйлатасси çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Халăх хушшинчи политикăллă агитаци ĕçне конкретлă, большевикла чăнлăхăн сăмахне кашнӳ суйлавçă патне çитермелле организацилес пулать. Агитколлективсен, агитаторсен политикăллă агитаци ĕçĕн центрĕ суйлав участокĕ пулса тăмалла. Суйлав участокĕсенче СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне, çавăн пекех уйрăм округсем тăрăх выраннти Советсен депутатне суйлама тăратнă кандидатсемшĕн большевикла агитаци ĕçне куллен туса пымалла.

Суйлав участокĕсенче, агитпунктсенче, суйлавçăсен хваттерĕсенче уйрăм калаçусем, ушкăнлă калаçусем, лекцисем, докладсем туса иртерме агитаторсемпе пропагандистсен чи лайăх вăйĕсене уйăрмалла. Иртнĕ суйлавсенчи опытсем тăрăх, райкомсем тата горком ҫумĕнче ытларах квалификациллĕ агитаторсен групписем туса, уйрăм участоксенче массăллă агитаци ĕçне вăйлатма тăрăшмалла.

Суйлав участокĕсенчи агитпунктсен ролĕ питĕ пысăк. Унта суйлавçăсем пысăк хаваслăхпа çӳресе хаçат-журналсем, кĕнекесем вулама, лекцисем, докладсем итлеме пултарччăр. Анчах та ВКП(б) хăшпĕр райкомĕсем суйлав участокĕсенче агитпунктсем организацилеме васкамаççĕ-ха. Хĕрлĕ Чутай, Советский, Сĕнтĕр районĕсенче ку тарана çитсе те суйлав участокĕсенче агитпунктсем туман. Шупашкар хулинче те суйлав участокĕсенчи агитпунктсем конкретлă ĕçе тытăнман. Ĕç çакăн пек пыни виçĕ суйлав округне кĕрекен районсенчи ВКП(б) райкомĕсем суйлав кампанине çителĕксĕр ертсе пыни çинчен калать. Массăллă-политикăллă агитаци ĕçне хакламаннине хăвăрт пĕтерес пулать.

Суйлав кампанийĕ вăл агитаци ĕçĕн пур тĕрлĕ формисемпе те анлăн усă курма хушать. Уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Советне тата выраннти Советсене депутатсем суйлас кампанипе çыхăнтарса массăллă митингсем, пухусем туса вĕсенче тĕнчери лару-тăру çинчен, тĕне хирĕçле темăсем тăрăх докладсем, калаçусем, лекцисем тăвассине анлăн сармалла. СССР Конституцийĕ тата суйлав Положенийĕ çинчен, умра тăракан задачăсем çинчен кашни суйлавçăна тĕплĕн ăнлантарса парасси агитаци ĕçĕнче пысăк вырăнта тăмалла. Пирĕн суйлавçăсем суйлавсене малтанхи хут мар хутшăннă, вĕсен опыт пысăк, тесе Конституципе суйлав Положенине ăнлантарса парассине хакламанни пулмалла мар.

Суйлавçăсене СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне, çавăн пекех выраннти Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа ăнлантармалла, çапла вара суйлавçăсене февралĕн 16-мĕшĕнче суйлавсене пĕр çын пек харăс тухма пур енчен те хатĕрлесе çитермелле. Совета хирĕçле этемсем суйлава организованно ирттересснне чăмантарма пур майсемпе те хăтланнине манма юрамасть. ВКП(б) райкомĕсен, пуçламăш парторганизацисен тата пĕтĕм агитаторсен тăшманла этемсене татăклă отпор пама хатĕр пулмалла.

Агитаци пахалăхĕшĕн тăрăшасси пысăк ĕç. ВКП(б) райкомĕсен тата пуçламăш парторганизацисен агитаторсен ĕçĕсене куллен тĕрĕслесе тăмалла, ĕçре пулăшса пымалла. ВКП(б) Шупашкар горкомĕ, Вăрмар райкомĕ суйлав кампанинче ĕçлес ыйту тăрăх агитаторсен канашлуне туса ирттерни, вĕсене ĕçре пулăшни—лайăх пуçару. Çак ĕçе ытти районсенче те туса ирттерес пулать.

Районти хаçатсемпе радиоузелсен суйлав кампанинчи ролĕ уйрăмах пысăк. Уйрăм округсем тăрăх СССР Верховный Советне тата выраннти Советсене депутатсем суйлакан районсенчи хаçатсен, радиоузелсен суйлавçăсене суйлав законĕ çинчен ăнлантарса парас, кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе халĕ тытăнмалла, парторганизацисене массăллă-политикăллă агитаци ĕçне анлăн сарма пулăшмалла.

Çак районсенче суйлав умĕнхи канашлусем пулса иртеççĕ, вĕсенче депутата суйлама тăратнă кандидатсемшĕн агитацилеме доверенăйсем суйлаççĕ. Доверенăйсем хăйсен ĕçне кая юлса ан тытăнчăр тесен, вĕсене суйланă хыççăнах кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе хутшăнтармалла. Парти райкомĕсен доверенăйсен ĕçне куллен ертсе пымалла, кашни суйлавçăна депутата тăратнă кандидатăн пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе тĕплĕн паллаштармалла.

Уйрăм округсем тăрăх пулса иртекен суйлав кампанийĕ кашни кун ытларах та ытларах сарăлса пырать. Политикăллă агитаци ĕçне тата вăйлăн туса пымалла. Массăна сыхăну тытассине сарса çирĕплетсе пыни тăрăх парторганизацисен суйлав кампанине куллен ертсе пынипе февралĕн 16-мĕшĕнче коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн çĕнĕ чаплă çĕнтерӳ тумалла.

УЙРĂМ ОКРУГСЕНЧИ СУЙЛАВ КАМПАНИЙĔ

Çĕнĕ строительствăри рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕн

Михаил Андреевич Андреев

юлташăн кандидатурине тăратнă

Январĕн 24-мĕшĕнче ĕç пуçланиччен ирхине, çĕнĕ строительствăри рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Шупашкар хула Советне 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх депутата суйлама кандидат тăратас ыйтăва сӳтсе-явăрĕ.

Участокри чи лайăх стахановец, каменщиксен бригадин бригадирĕ И. А. Крайнов юлташ сăмах илет. Вăл 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕн Михаил Андреевич Андреев юлташăн кандидатурине тăратма сĕнет.

— Андреев юлташ, — тет Крайнов юлташ, — Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн парăннă çын, вăл халăх шанăçне тӳрре кăларма пултарать.

Сăмах тухса каланă Чапраева, Якимов, Фролов юлташсем Крайнов юлташăн сĕнĕвне хапăл туса йышăнчĕç, Михаил Андреевич Андреев юлташ салăх шанса панă ĕçе тивĕçлипе пурăçа кĕртме пултарни çинчен пĕр шухăшлă пулса каласа пачĕç.

Пуху пĕрсаслă пулса 23-мĕш номерлă суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕн Михаил Андреевич Андреев юлташăн кандидатурине тăратма йышăнать.

Пуху йышăннă резолюцире çапла каланă: «Эпир, рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем, 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама Михаил Андреевич Андреев юлташа кандидата тăрататпăр. Эпир Андреев юлташран 23-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтатпăр».

* * *

Юлашкинчен пуху С. Васильев юлташа доверенăй пулса ĕçлеме суйларĕ.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен ĕçе тытăнмалла

Виçĕмкун Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕнче Шупашкар суйлав округне кĕрекен суйлав комиссийĕсен председательĕсен, вĕсен заместительĕсен тата комиси секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлура Шупашкар хула Совет исполкомĕн председательĕн заместительĕ И. Петров юлташ участоксенчи суйлав комиссийĕсен умĕнче тăракан практикăллă задачăсем çинчен доклад туса пачĕ. Пренире Шупашкар суйлав округ комиссийĕн председательĕ Терентьев, Ворначев (исполком), Михайлов (ВКП(б) хула комитечĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Терентьев юлташ хăйĕн сăмахĕнче уйрăмăнах суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕс тăвасси пирки нумай чарăнса гăчĕ. Вăл иртнĕ суйлавсенче пулнă ситменлĕхсене астутарчĕ. Унчухне чылай суйлавçăсен ятне, ашшĕ ятне, е хушаматне пăсса пĕтернĕ пулнă.

Çав ситменлĕхсем кăçал та пулма пултараççĕ. Ана çак пример лайăх кăтартса парать: хула Совечĕн исполкомĕ участоксенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетесси çинчен йышăннă постановленине пичетлесе кăларчĕ. Çак постановленире те хăшпĕр юлташсен ячĕсене, е ашшĕ ячĕсене пăтраштарса пĕтернĕ. Списоксене тамиçе пиншер суйлавçăна кĕртмелле. Пĕр суйлавçă та список тулашĕнче ан юлтăр, кашни суйлавçăн ячĕ, ашшĕ ячĕ, хушамачĕ списокра тĕрĕс пултăр. Суйлав комиссисен тĕрĕс списоксем тума хула Совечĕн исполкомне пулăшас пулать. Кашни суйлавçă хăйĕн ятне тĕрĕслетĕр, апла пулсан комиси ăçта вырнаçнине, вăл хăш вăхăтра ĕçленине мĕнпур суйлавçăсене пĕлтермелле. Комисси членĕсен черетне таттисыпписĕр дежурствăра пулмалла.

Хуçалăхла тата организацилле ыйтусем çине ытларах çавăрăнса пăхмалла. Çак кунсенче суйлав ирттерме мĕн кирлĕ, çавсене пурне те çителĕклĕ хатĕрлесе хумалла. Суйлав комисси çуртĕнче кăтартуллă йĕркеллĕх тата культурлăх пулмалла, унта пыракан суйлавçă хăйне интереслентерекен мĕнпур ыйтусем тăрăх консультацисем илме пултартăр, пушă пулсан, вăл хăйĕн вăхăтне культурăллă иртертĕр.

Кабинăсене мĕнле майпа вырнаçтарсан лайăхрах, мĕнле майпа суйлав кунне лайăхрах организацилесе ирттермелле — çак ыйтусем çинчен тĕплĕнрех шухăшласа пăхас пулать. Иртнĕ суйлавсенче чылай чухне бюллетеньсем илнĕ çĕрте пысăк черетсем пулкаларĕç. Кăçал ун пек ан пултăр. Кабинăсене лайăхрах вырнаçтарса тухмалла. Кашни суйлавçă валли вăрттăнлăх пулмалла. Вăл ирĕклĕн сасăласа хăйĕн пит те пысăк тивĕçне пурнăçа кĕрттĕр.

Партиллĕ-массăллă ĕçе лайăх организацилессине пĕр минутлăха та манмалла мар. ВКП(б) хула комитечĕ кашни участок çумне агитколлективсем çирĕплетсе панă. Вĕсем хăйсен мĕнпур ĕçне план тăрăх, анлăн туса пымалла. Партиллĕ-массăллă ĕçе кăтартуллăн организацилес пулсан, актива ĕçе явăçтарас пулать.

Уйрăм округсенчи суйлав кампанийĕ пуçланчĕ. СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама кандидатсем тăратнă. Коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блокĕн татах та чаплă çĕнтерĕвĕсемшĕн çине тăрса кĕрешесси — мĕнпур совет çыннисен çавтери хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Производствăри çĕнĕ çĕкленӳ

ЕТĔРНЕ Пушнарти Чкалов ячĕпе тăракан промарткоп 1940 çулти производствăллă плана 134 процент тултарнă. Халĕ артельте ĕçлекенсем Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци уçăлнă тĕле пĕрремĕш кварталти производствăллă плана 75 процент тултарма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна тултарассишĕн артель членĕсем хушшинче ăмăрту сарăлса, стахановла ĕçлекенсен йышĕ ӳссе пырать. Н. Токарев тата И. Яковлев çĕвĕçсем кулленхи нормăна 200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Тĕрĕ тĕрлекенсем хушшинче ăмăрту анлăн сарăлать. Р. Абрамова, Л. Смирнова, М. Иванова, Н. Токарева, Н. Ефимова юлташсем кулленхи нормăна яланах ирттерсе тултараççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Агитаци ĕçĕ сарăлса пырать

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, январĕн 24-мĕш. (Телефонпа). Районра суйлав умĕнхи агитаци ĕçĕ вăйлăн сарăлса пырать. Суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче агитаци ĕçне йĕркелесе ярасси çинчен пур ялсенче те агитаторсемпе ялти активистсен канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Агитаторсем хальхи вăхăтра суйлавçăсене СССР Верховный Советне суйламалли Положени тата Сталинла Конституци çинчен ăнлантарса параççĕ.

Участокенчи суйлав комиссиисенче ĕçлеме чи лайăх çынсене уйăрнă. Сăмахран, Уйпуç ялĕнчи участокри суйлав комиссин председательĕ пулса ĕçлеме райсовет депутатне коммунист Назаров юлташа çирĕплетнĕ. Ишеккассинчи участокри суйлав комиссин секретарĕнче учитель-орденоносец Орлов юлташ ĕçлет. Участоксенчи суйлав комиссисем ĕçе тытăнчĕç.

Январĕн 23-мĕшĕнче районра пур çĕрте те суйлавçăсен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Хĕрлĕ Чутайри çимĕç типĕтекен заводра ĕçлекенсен пухăвĕ Етĕрнери çу çапакан заводпа спирт заводри рабочисемпе служащисен тата инженерно-технически работниксен коллективĕ СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне депутата суйлама ВКП(б) Обком секретарĕн Яков Кузьмич Павлов юлташăн кандидатурине тăратма йышăннинĕ хапăл тусах ырларĕ. Суйлавçăсем кăçалхи февралĕн 16-мĕшĕнче хăйсен сасĕсене Павлов юлташăн пама пулаççĕ. Ачкассинчи «Сталь» колхоз членĕсен пухăвĕ те Я. К. Павлов юлташ кандидатурине тăратнине ырласа йышăнчĕ.

Хальхи вăхăтра агитаторсем суйлавçăсене Павлов юлташăн биографийĕпе паллаштараççĕ.

Суйлав участокĕсенче суйлав кунне хатĕрленес ĕç хĕрӳллĕн пырать: суйлав ещĕкĕсене тепĕр хут тĕрĕслесе тухаççĕ, сасăламалли пӳлĕмсем уйăрса кабинăсене йĕркелеççĕ.

ЧУЧАКОВ. ТИХОНОВ.

Колхоз 10 çул тултарчĕ

ÇĔРПУ. Кăшаркасси ялсоветне кĕрекен Буденный ячĕпе тăракан колхоза организацилени 10 çул тултарчĕ. Çак 10 çул хушшинче колхоз организацине хуçалăх енчен нумай çирĕпленчĕ. Тырпул тухăçĕ çулран çул ӳссе пырать.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те пысăк утăмсем тунă. Колхозра 4 ферма организациленĕ. Выльăхсене усрама 6 вите çĕнĕрен тунă.

Иртнĕ çулсенче икĕ арман тунă тата пĕр двигатель туяннă. Тырпулсене усрама амбарсем те тунă. Çитес çулта колхоз клуб лартма палăртнă.

С. НИКОЛАЕВ.

Колхэсенчи управлени аппарачĕ çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ 1941 çулти январĕн 15-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Тĕрĕслесе тухнă хыççăн çакна палăртнă: нумайĕш колхозсенче администрацине управлени тата обслуживани аппаратне ытлашши пысăклатса янă тата вĕсене тытса тăма кăларакан расходсем калама çук пысăк. Колхозсенчи кирлĕ мар çĕртенех ӳстерсе янă штатсем тата администрацине хуçалăх енĕпе кăларакан ытлашши расходсем колхозсенче ĕçкунĕсене кирлĕ мар çĕре выраннсăр салатса пĕтересси патне илсе пыраççĕ тата ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухма чăмантараççĕ.

Час-часах çакăн пек те пулать: пĕчĕк колхозсемех хăйсен управлени тата обслуживани аппаратне туса йĕркеленĕ чухне шултра колхозсен примерĕ тăрăх аппарата ӳстерсе ярааççĕ, хăйсен хуçалăхĕн уйрăмлăхĕсене тата пысăкĕшне шута илмеççĕ.

Сăмахран, Ишлей районĕнчи «Красный танк» колхозра артелĕн производствăра ĕçлекен кашни 5 членĕ пуçне администрацине обслуживани ĕçĕнче ĕçлекен пĕр колхозник тивет. Çĕрпӳ районĕнчи «Актай» колхозра ĕçлеме пултаракан 34 колхозникран 13 çын (38,2 процент) администрацине хуçалăх ĕçĕсенче ĕçлеççĕ. Улатăр районĕнчи «Красный партизан» колхозра ĕçлеме пултаракан 127 çынран 27 çынна производствăллă ĕçсен хăтарнă.

Производствăна сиен тумасăрах нумайĕш колхозсенче штатсене чакарма пулать, çапла туни колхоз производстви валли тата социализмлă промышленность нушисем валли ĕç вăйĕ нумай уйăрса памăк пултарĕччĕ.

Чылай районсенче управлени расхочĕсене пуçран шухăшласа кăларнă должноҫсем валли ӳстерсе ярааççĕ, сăмахран, Сĕнтĕр районĕнче 17 колхозра транспорт енĕпе 27 заведующи тытаççĕ, çав вăхăтрах транспорта бригадăсем çумне çирĕплетмелле тата транспорт йĕркеллĕ пулассишĕн тата унпа усă курассишĕн колхозсен бригадирĕсем ответ тытма тивĕçлĕ.

Администрацине правлени штачĕсене ӳстерсе янипе пĕрлех нумайĕш колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисенчи выльăхсене пăхма работниксем ытлашши нумай уйăраççĕ. Шăмăршă районĕнчи «Пламя труда» колхоз ферминче 8 ĕнене икĕ доярка пăхаççĕ: çав районрах «Новая деревня» колхозра кашни конюх пуçне ĕçлекен 5 лаша тата 3 тиха тивет, норма тăрăх пĕр конюхăн 10 лаша пăхмалла.

Администрацине управлени аппаратне йĕркелес ĕçре, ĕç вăйне вырнаçтарса тухас тата çав ĕçре ĕçлекен колхозниксене ĕçукçи тӳлес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри вăл — çак ыйтусем çине çĕрĕç органĕнсем тата советпа парти органĕнсем тимлĕн çавăрăнса пăхманран, контроль туса тăманран килнĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ — колхозсенчи ытлашши штатсене чакармалла тата администрацине управлени персоналне кирлĕ минимум чухлĕ çеç хăвармалла, тесе шутлаççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Область Комитечĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Колхозсене Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ уйрăм колхозсен опытне шута илсе туса хатĕрленĕ примерлă штатсем сĕнес.

2. Райĕрĕç пайĕсене, ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсене кăçалхи январь — февраль уйăхĕсенче кашни уйрăм колхозăн администрацине управлени тата обслуживани ĕçĕнчи персонала çĕнĕрен пăхса тухса ытлашши должноҫсене пурне те чакарма хушас, çав ĕçсенчен хăтарнă çынсене колхозсен производствăллă бригадисене, звеносене тата выльăх-чĕрлĕх фермисене ĕçлеме ямалла.

3. Колхозсен производствăллă планĕсене тата приходпа расход сметисене йышăннă чухне колхозсен штат расписанийĕсене кашни çулах ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсене пăхса тухса çирĕплетмелле тăвас.

4. Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райсоветсемпе ВКП(б) райкомĕсене ĕçкунĕсене, администрацине управлени тата обслуживани аппаратне тытса тăнă çĕре каймалли средствăсене мĕнле расходланине тăтăшах контроль туса тăма хушас.

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. СОМОВ.

ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

Районри промышленноҫа техникăллă пулăшу

РСФСР Наркомместпромĕ районри промышленноҫа техникăллă пулăшу парас ĕçе организацилет. Райпромкомбинатсене куллен кирлĕ хăшпĕр йышши таварсен производствин технологиллĕ процесĕ çинчен ăнлантарса çырнă описанисене, мастерскойсем хăйсен вăйĕпе туса хатĕрлеме пултаракан оборудованисен чертежĕсене, предприятисен, цехсен, мастерскойсен типлă проекчĕсене ярса параççĕ. (ТАСС).

Ăмăртăва хутшăннă коллективсем

СЕНТЕРВАРРИ. ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе ыраккан ăмăрту Сĕнтĕрвăрри районĕнче анлăн сарăлса кайнă. Ăмăртăва кунран-кун çĕнĕ коллективсем хутшăнаççĕ. Наркомместпромăн катка-пичкепе обоз завод коллективĕ (директорĕ Белов) февралĕн 15-мĕш тĕлне 1941 çулти пĕрремĕш кварталти производствăллă плана пĕтĕмĕшпех пурнăçласишĕн кĕрешет. Ку кĕрешӳре катка-пичке тăвакан цех малта пырать (цех заведующийĕ Дубов). Ку цехăн партин конференцийĕ уçăлнă куна пĕрремĕш квартал планне тултарас пулсан, кулленех 1131 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла. Цех кулленех 1626 тенкĕлĕх продукци туса кăларать. Çапла вара хăйĕн обязательствине лайăх пурнăçласа пырать. Уйрăм стахановецсем ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Рабочи В. Буров хăйĕн кулленхи нормине яланах 208 процент таран тултарса пырать, В. Валетов — 203, Копылов—163 процент тултарса пыраççĕ.

Çĕнсалари катка-пичке тăвакан заводри рабочисем партконференци уçăлнă куна пĕрремĕш кварталта производствăллă плана 70 процентран кая мар тултарма пулнă. Январь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче завод лайăх ĕçлесе пычĕ. Хăй çине илнĕ обязательствăна пурнăçлама заводăн кулленех 5385 тенкĕлĕх продукци туса кăлармалла. Завод кăна ытлашшипех тултарса пырать. Вăл кулленех 6277 тенкĕлĕх продукци туса кăларать. Кунта стахановецсем шучĕ те ӳссех пырать. Кулленхи нормăна 150 процентран пуçласа 219 процента çитиччен тултарса пыракансем 10 çын.

Ивановăри кирпĕч завочĕн коллективĕ 1-мĕш кварталти производство планне февралĕн 15-мĕш тĕлне 80 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ. Завод çак хушăра 3.000 кубла метр вутă хатĕрленĕ, кирпĕч типĕтмелли сарайсене юсама тата туса кăларакан кирпĕч хакне 5 процент таран йӳнетме пулчĕ.

Н. ТИТОВ.

Промышленность предприятисенчи коммунистсен пухăвĕ

Январĕн 23-мĕшĕнче Советсен çурчĕн залĕнче Шупашкар хулинчи промышленность предприятисенчи тата промысла артелĕсенчи коммунистсен пухăвĕ пулса иртрĕ. ВКП(б) горком секретарĕ М. Андреев юлташ доклад туса пачĕ. Вăл хăйĕн докладĕнче хулари промышленность 1940 çулта мĕнле ĕçлени тата 1941 çулти задачăсем çинчен тĕплĕн каларĕ.

Государствăн Шупашкар хулинчи промышленноҫĕ 1940 çулта 1939 çултинчен чылай лайăхрах ĕçленĕ. 1939 çултипе танлаштарсан, иртнĕ çулта 39.900 тенкĕлĕх ытларах продукци туса кăларнă. Чылай предприятисемпе артельсем хăйсен производство программисене ăнăçлă тултарнă. Пĕрремĕш тата иккĕмĕш номерлĕ пекарньăсем, «Инпошив» артелĕ, механизацине арман, Ленин ячĕпе тăракан артель иртнĕ çулти производство планне ытлашшипех тултарнă. Предприятисемпе артельсенче стахановла движени анлăн сарăлса пырать, продукци пахалăхĕ лайăхланать, ĕç дисциплини çирĕпленет.

Анчах та хулари хăшпĕр предприятисемпе артельсем начар ĕçлеççĕ-ха. Спирт завочĕ, макарон фабрики, типографи, кирпĕч завочĕ, «Кооператор» артелĕ тата ыттисем те производство программине тултарайман. Чылай предприятисенче продукци пахалăхĕ тӳсме çук начар. Кирпĕч завочĕ 3-мĕш сортлă кирпĕч туса кăларассине 200 процент тултарнă, пĕрремĕш сортлă кирпĕч туса кăларас плана 80 процент ытларах кăна тултарнă. «Кожупряжь» туса кăларнă е юсанă атăпушмаксем пĕрер эрне тăхăнсанах юрăхсăра тухаççĕ. Продукци пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕçе чылай предприятисен директорĕсем тата вĕсенчи пуçламăш парторганизацисем тивĕçлипе хакламаççĕ.

Предприятисенче ĕçе тĕрĕс организацилеменни, ĕç вăйĕ пĕрмаях улшăнса тăни, социализмла ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кирлĕ пек кĕрешменни, стахановла движенине организацилесе ертсе пырас ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхни, партиллĕ-политикăллă ĕçе производствăллă задачăсене пурнăçлассипе çыхăнтарса пыманни — çакă пулать ĕнтĕ чылай предприятисемпе артельсем хăйсен планĕсене тултарманнин сăлтавĕ.

Çĕнĕ стройкăра, кирпĕч заводĕнче, спирт заводĕнче тата ытти предприятисенче ĕçе килсенех тухса каякансем, СССР Верховный Совет Президиумĕн 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи Указне пăснисем нумай. Çапла пулин те пуçламăш парторганизацисем предприятисенче рабочисен яланхи кадрне тăвас тĕлĕшпе питĕ сахал ĕçлеççĕ.

Акă хăшпĕр фактсем. Кирпĕч заводĕнчи пуçламăш парторганизаци производство ыйтăвĕне хутран-ситрен кăна интересленет. 1940 çулти январь уйăхĕнче завод 1939 çулти планă мĕнле тултарни, июль уйăхĕнче 1940 çулти малтанхи çурçуллăх итогĕсем çинчен сӳтсе-явнă, вара производство ыйтăвĕсем çинчен пачах манса кайнă. Производствăри çитменлĕхсене пĕтерме коммунистсене тата пĕтĕм коллектива мобилизацилес тĕлĕшпе нимĕнле конкретлă ĕçсем те туман.

Водосветри пуçламăш парторганизаци хăйĕн пухăвĕнче производство ыйтăвĕсене час-часах сӳтсе-явать. Анчах та çав решенисем мĕнле пурнăçланнине тĕрĕслемест, йышăннă решенисем хут çинчех юлаççĕ.

Пухура производствăллă предприятисенчи хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем контроль правине тĕрĕс пурнăçа кĕртменни палăрчĕ. Водосветри, тир-сăран комбинатĕнчи пуçламăш парторганизацисем директор тумалли ĕçе хăйсем çине илеççĕ. Водосветри организаци хăйĕн пĕр пухăвĕнче цех начальникĕсене, бригадирсене приказсем парса решени йышăннă. Çакăн пек пуçламăш парторганизацисем хуçалăх руководителĕсен авторитетне ӳстерес, вĕсене ĕçре пулăшас тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ.

Предприятисенче политикăллă агитаци ĕçне нумай лайăхлатмалла. Халĕ агитаци ĕçĕ конкретлă мар, предприятисен ĕçне лайăхлатассине таччăн çыхăнса пымасть. Агитаци ĕçĕнче харпăрхăй предприятинчи ĕç дисциплинине пăсакансене, машинăсене, инструментсене, чĕрĕ-тавара, укçа-тенкĕне тирпейсĕр тытакансене, продукци пахалăхне пăсакансене хирĕç кĕрешессине çыхăнтарса пымаççĕ.

Пухура коммунистсен производствăри авангардлă рольне ӳстерес ыйту çивĕччĕн тăчĕ. Семенов (автогужтрестри шофер), Чапраева (çĕнĕ строительство) юлташсем пек примерлă ĕçлекен коммунистсем сахал мар. Анчах та ĕçре кайра пыракансем те çук мар. Пуçламăш парторганизацисем коммунистсен производствăри авангардлă рольне ӳстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ.

Пуху промышленность предприятисене парторганизацисем енчен ертсе пырассине лайăхлатма, ВКП(б) Пĕтĕм Союзри конференци ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва татах та анлăрах сарса пыма кирлине палăртса решени йышăннĕ.

Ленинизмăн классикла произведенийĕ

(Сталин юлташăн „Ленинизм ыйтăвĕсем пирки“ ятлă произведенийĕ пичетленсе тухнăранпа 15 çул тултарнă тĕле)

Вунпиллĕк çул каялла—1926 çулти январĕн 25-мĕшĕнче—Сталин юлташăн «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» ятлă генийлĕ произведенийĕ пичетленсе тухнă. 1925 çулти декабрьте партин XIV съезчĕ пулса иртнĕ,—Сталин юлташăн ку произведенийĕ, съезд хыççăн часах пичетленсе тухнăскер, партин çак XIV съезчĕн решенийĕсене теори тĕлĕшĕнчен никĕсленĕ.

Сталин юлташ хăйĕн произведенийĕнче контрреволюциллĕ троцкистла-зиновьевла бандăн предателле, ликвидаторла «философине» идея тĕлĕшĕнчен аркатса тăкнă, партин çĕршыва индустрилес тата ССР Союзĕнче социализмлă общество тăвас çулийĕнче никĕсленĕ.

«Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» кĕнекене Сталин юлташ ВКП(б) Ленинград организацине хисеплесе çырнă.

«Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» кĕнекене пĕтĕм партие тата рабочи класса социализм строительстви çĕнтерӳллĕ пуласшăн ирĕпрĕн ĕненсе тăнипе хĕçпăшаллантарчĕ. Сталин юлташăн çак произведенийĕ, пирĕн революци аталанăвĕнчи улшăну самантĕнче пичетленсе тухнăскер, пирĕн партипе çĕршывăн пурнăçĕнче идейăллă пысăк событи пулса тăнă.

* * *

Партин XIV съезчĕ чухнехи тапхăрăн, Сталин юлташ кăтартса панă тăрăх, Октябрьти социализмлă революцие хатĕрленнĕ тапхăртипе пĕр пек ĕнĕ пулнă: «Çак пĕр пек ĕнĕ вăл ку икĕ тапхăр та пирĕн революци аталанăвĕнчи улшăну самантне палăртса тăнинче пулать» (И. Сталин, «Об октябрьской революции», стр. 106, Партиздат, 1932).

Октябрьти революцие хатĕрленнĕ тапхăрта капитализма политика тĕлĕшĕнчен çĕнтерес ыйтăва татса памалла пулнă; партин XIV съезчĕн тапхăрĕнче капитализма экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерес ыйтăва татса памалла пулнă. Ку тапхăрта парти умне çакăн пек ыйтусем тухса тăнă: «Совет Союзĕнче хуçалăх строительствине мĕнле çулпа илсе пымалла, социализм патнелле-и, е мĕнле те пулин урăх çулпа? Эпир социализмлă хуçалăх тумалла-и тата ăна тума пултаратпăр-и, е пире урăххи валли, капитализмлă хуçалăх валли çĕре тислĕкпе çемçетсе хума пӳрнĕ-и? ССР Союзĕнче, пĕтĕмĕшпе илсен, социализмлă хуçалăх туса хума пулать-и, туса хума пулать пулсан, ăна капитализмлă çĕршывсенче революци пуласси вăраха кайсан тата капитализм стабилизациленнĕ вăхăтра тума пулать-и? Çĕршывра социализм вăйĕсене пур майсемпе те çирĕплетсе тата сарса пырса, унпа пĕрлех халлĕхе капитализма та кăштах ӳсме май паракан экономикăллă çĕнĕ политикăн çулĕсемпе пырса социализмлă хуçалăх тума пулать-и? Мĕнле туса пымалла халăхăн социализмлă хуçалăхне, хăш вĕçĕнчен пуçламалла çав строительствăна?» «(ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», чăвашла изд., стр. 331).

Çак мĕнпур ыйтусем çине Сталин юлташ хăйĕн доклачĕсемпе статьисенче: «РКП(б) XIV Конференци ĕçĕсен итогĕсем çинчен» тунă докладра, партин XIV съездĕнче тунă политикăллă отчетра тата «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенире ответ панă. Сталин юлташăн çак произведенийĕ капитализма экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерессине, пирĕн çĕршывра социализм тăвассине теори енĕпе çутатса никĕслени тата ку задачăна пурнăçа кĕртмелли конкретлă-практикăллă план пулнă.

Сталин юлташ пирĕн çĕршывра социализм çĕнтерести çинчен тăракан ыйту ленинизм тупсăмĕпе—империализмăн тата пролетариллĕ революцисен эпохинчи марксизм пулса тăракан ленинизмăн тупсăмĕпе—тарăннăн, уйрăлми çыхăнса тăнине кăтартса панă.

«Ленинизм никĕсĕсем çинчен» вулакан лекцисенче Сталин юлташ: ленинизм империализмăн тата пролетариллĕ революцисен эпохинчи марксизм пулса тăрать, тесе каланăччĕ, çапла вăл ленинизма классикла определени панă. Сталин юлташ хăйĕн «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенийĕнче ленинизм тупсăмĕ çинчен тăракан ыйтăва тата ленинизм марксизмпа мĕнле çыхăнса тăнине çутатса парасшăн тĕп вырăна хунă. Марксизмпа ленинизм уйрăлми çыхăнса тăнине, Маркспа Энгельсăн вĕрентĕвне ленинизм малалла аталантарнине Сталин юлташ генийлĕ ăсталăхпа кăтартса панă. Çакăнпала ĕнтĕ тăшмансем ленинизма хирĕç кĕрешни çав вăхăтрах марксизма хирĕç кĕрешни пулса тăнине кăтартса панă.

Çиннĕ эпохăри марксизм пулса тăракан ленинизма анализ туса, Сталин юлташ ленинизмра, марксизмри пекех, пролетариат диктатури çинчен калани тĕп вырăн йышăнса тăраканни, тесе вĕрентет. Сталин юлташ çапла çырнă: «Империализм çинчен тăракан ыйту, империализм сикчевлĕ аталанса пыни çинчен тăракан ыйту, социализм пĕр çĕршывра çĕнтересси çинчен тăракан ыйту, пролетариат государстви çинчен тăракан ыйту, государствăн советлă форми çинчен тăракан ыйту, пролетариат диктатури системинче партин ролĕ çинчен тăракан ыйту, социализм строительствин çулĕсем çинчен тăракан ыйту,—çак ыйтусене пурне те ыйтăпах Ленин тĕпчесе хатĕрлесе пани тĕрĕс мар-и вара? Ыйтăпах çак ыйтусем ĕнтĕ пролетариат диктатури идейăин тĕрекĕ, унăн никĕсĕ пулса тăни тĕрĕс мар-и вара?» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 108—109).

* * *

Социализм пĕр çĕршывра çĕнтересси çинчен вĕрентни «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» ятлă пĕтĕм произведенире палăрса тăрать. Ку ыйтăва ятарласах çырнă икĕ сыпăкра (улттăмĕшпе çичĕмĕш сыпăксенче) çутатса панă кăна мар, тата пирвайхи сыпăкĕсем те çак ыйтупа таччăн çыхăнса тăраççĕ.

Ленин пĕр çĕршывра социализм тăвасси çинчен вĕрентнине малалла аталантарас ĕçе Сталин юлташ Ленин империализм çинчен, пролетариллĕ революцине пролетариат диктатури çинчен, партин çакăнти ролĕ çинчен калашине асра тытса тата совет государствин строительствинчи опыта хисеплесе туса пынă.

Сталин юлташ çапла кăтартса панă: пролетариллĕ революци—çĕнĕ экономика, социализмлă экономика тумаллине пĕлтерет, тенĕ. Буржуаллă революци кивĕ обществăрах капитализмлă укладăн хатĕр формисене тупать пулсан, пролетариллĕ революци социализмлă укладăн хатĕр формисем çук чухне пуçланать. Çавăнпа та влаçа илнĕ хыççăн социализмлă революцин тĕп задачи—çĕнĕ, социализмлă экономика тăвасси пулать. Буржуаллă революцире влаçа тытса илни революцин вĕçленĕвĕ пулать пулсан, пролетариллĕ революцире ку вăл—пуçламăшĕ кăна-ха.

Сталин юлташ пролетариллĕ революцин тĕп задачисем çинчен кăтартса панисемпе пĕтĕмпех килĕшӳллĕн, парти: «...тĕп задача—пĕтĕм çĕршывра вăрăх çĕнĕ, социализмлă хуçалăх строительствине сарса ярассинче тата çапла майпа капитализма **экономика** тĕлĕшĕнчен те тĕппипех пĕтерсе ларассинче пулса тăрать», тесе шутланă («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», чăвашла изд., стр. 332).

Çапла ĕнтĕ, пирĕн çĕршывра социализм тума пуласси тата социализм туни кирли пролетариат диктатурин пĕлтерĕшĕнчен тухса тăнă, вăл (пролетариат диктатури) буржуази диктатуринчен политикăллă влаçăн класлă природипе кăна мар, хăйĕн тĕллевĕсемпе тата задачисемпе те уйрăлса тăрать.

Сталин юлташ: рабочи класс, сирĕнтерсе антарнă эксплоататорсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкассăн, мĕнпур çĕршыннисене пролетариат тавра пĕтĕçтермелли строительство организацилессĕн, империализма хирĕç кĕрешме революцине хĕçпăшаллантарассăн, хăйĕн влаçне тытса тăма, ăна çирĕплете тата ăна никам çĕнтерейми туса кума пултарать, тесе вĕрентет. Çак задачасене ăнăçлăн татса памашкăн социализмлă экономика туса хумалла, социализмлă строительство çĕнтересшине организацилемелле пулнă.

Социализм строительстви пролетариллĕ революцин тупсăмĕпе уйрăлми çыхăнса тăнине «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенире пит те ăста кăтартса панă.

* * *

Сталин юлташ Ленинăн тезисне — социализм малтанлăха пĕр çĕршывра çĕнтерме пултарни çинчен тата вăл пĕр вăхăтрах пур çĕршывсенче те çĕнтерни пулма пултарайманни çинчен калакан тезиса—малалла аталантарать. Ку тезис вăл Ленин уçса палăртнă законран—капитализмăн экономикăллĕ тата политикăллă аталанăвĕ пĕртан мар пулса пынинчен—тухса тăрать. Сталин юлташ пирĕн хамăрăн çĕршывра хамăрăн (шалти) вăйсемпех, тулашран государствăллă пулăшу илмесĕрех, социализм тума мĕн кирли пурте пуррине кăтартса панă. Эпир хамăрăн вăйсемпех рабочи класпа хресченсем хушшинчи хирĕçӳсене çĕнтерме, капитализма тĕппипех пĕтерсе хума, ăна политика тĕлĕшĕнчен кăна мар, экономика тĕлĕшĕнчен те çĕнтерме пултаратпăр.

Троцкистла-бухаринла предательсем, ССР Союзĕнче каллех капитализм туса хурас тесе ĕмĕтленнĕскерсем, социализм тума май çук текен шухăша йĕçыннисем хушшине сарма хăтланнă. Çавăнпа та партин тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкасси—ССР Союзĕнчи çĕнтерӳллĕ социализм строительствин чи кирлĕ условийĕ пулнă. Сталин юлташ ертсе пынипе парти троцкистла-бухаринла предательсене çĕмĕрсе тăкрĕ.

Сталин юлташ партие мобилизацилерĕ те пирĕн çĕршыври йĕçыннисене социализм тăвассишĕн кĕрешĕве илсе кĕчĕ. Çавăнпа пĕрлех Сталин юлташ партие: социализм татăклăнах çĕнтересси темиçе çĕршыври рабочисем пĕрле йĕленисĕр пулма пултараймасть, тесе асăрхаттарнă.

«Мĕн-ха вăл пĕр çĕршывра, ытти çĕршывсенче революци çĕнтермесĕрех социализм пĕтĕмпех, татăклăнах çĕнтерме **пултарайманни?**

Çакă вăл—сахалтан та темиçе çĕршывра революци çĕнтермесĕр, интервенци пуласран, апла пулсан вара, кивĕ буржуаллă йĕркесем каялла таварăнасран та пĕтĕмпех гарантилеме май çукки пулса тăрать. Çак ним тавлашма çук пложенине йышăнманни вăл — интернационализмран пăрăнни, ленинизмран пăрăнни пулать» («Ленинизм ыйтăвĕсем», чăвашла изд., стр. 139).

Капитализмлă йĕриташлăх пур чухне ССР Союзĕ çине тăшмансем тапăлас хăрушлăх та, интервенци хăрушлăхĕ те пулать. Акă мĕншĕн Сталин юлташ яланах пирĕн халăхăн **мобилизациллĕ хатĕрлĕхне** ӳстерсе, ССР Союзĕн оборона пултарулăхне тĕреклетсе, пĕнпур çĕршывсенчи йĕçыннисемпе интернационаллă сыхăну тытассине çирĕплетсе пыма чĕнет.

* * *

Сталин юлташ партин пролетариат диктатури системинчи рольне тĕплĕн тата пур енчен те кăтартса парать. «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» произведенири çак ыйтăва çутатса çырнă страницăсенче обществăна коммуниста урăхлатса çĕнтес çĕрте—çак пĕтĕм тĕнчипе историллĕ задачăна пурнăçа кĕртес çĕрте—парти çавтери пысăк вырăн йышăнса тăнине тарăннăн кăтартса панă. «...Парти руководстви,—тесе çырать Сталин юлташ,—пролетариат диктатуринче чи кирли пулса тăрать», парти руководствисĕр «пролетариатăн мĕн чухлĕ те пулин çирĕп диктатури пулма пултараймасть».

Кунтах Сталин юлташ парти массăпа мĕнле хутшăнса тăни çинчен тата парти массăсене ертсе пырассин меторĕсем çинчен каласа парать.

Сталин юлташ: парти вăл йĕçыннисен руководителĕ, çулпуçĕ, учителĕ унăн авторитечĕ массăсем парти çине шанса тăнинчен, массăсем партие пулăшса пынинчен килет, тесе вĕрентет. Сталин юлташ, малалла, массăсем парти çине шанса тăрасси вĕсем хушшинче пĕрмаях ĕçлесе пынинчен, парти хăйĕн политики тĕрĕссине **массăсене ĕнентерме** пĕлнинчен, йĕçыннисен массисене парти хăйне пулăштарма пĕлнинчен килет, тесе вĕрентет.

Вара Сталин юлташ нихăçан та манма юраман çак вывода тăвать: «...ĕнентерсе пырас метод вăл—парти класа ертсе пырас йĕçĕн тĕп меторĕ пулса çăрать» (çавăнтах, стр. 131).

Ĕнентерсе пырас метод руководствăн тĕп меторĕ пулса тăрать тесе, ВКП(б), партин решенийĕ майлă рабочи класăн нумайрахăшĕ, халăхăн нумайрахăшĕ тăрать пуласан, класăн сахалрахăшне вăйпах пăхăнтарассине те пĕртте пăрахăç тумасть. Сталин юлташ çапла кăтартса парать: ĕнентерсе пырас метода тĕп метод тесе йышăнни «ку вăл, паллах, парти мĕнпур рабочисене, пĕрьин юлмиччеех, ĕнентерсе çитермеллине, çакăн хыççăн тин вара ĕçе тытăнма юранине, çакăн хыççăн тин ĕçсене пуçласа яма юранине пĕлтермест Пĕртте пĕлтермест».

Малалла Сталин юлташ çапла çырать:

«Ну, мĕн тумалла-ха вара сахалрахăшĕпе, вăл нумайрахăшне хăй ирĕкĕпе пăхăнасшăн мар, пăхăнма килĕшесшĕн мар пулсан? Парти, нумайрахăшăн шанчăкĕ çине таянса тăрса, сахалрахăшне нумайрахăшĕн ирĕкне вăйпах пăхăнтарма пултарать-и, парти çавăн пек тума тивĕçлĕ-и? Çапла, пултарать тата тивĕçлĕ те. Руководство вăл массăсене ĕнентерни урлă пулса пырать, çак метод парти массăсем çине влияни памалли тĕп метод пулса тăрать. Анчах çакă вăл, вăйпа пăхăнтарни рабочи класăн нумайрахăшĕ партие шанса пулăшса тăни çине таянса тăрать пулсан, сахалрахăшне вăйпах пăхăнтарас ĕçе нумайрахăшне ĕнентермелле пултарнă хыççăн тăвaççĕ пулсан, вăйпах пăхăнтарни пулмалла маррине пĕлтермест, вăйпах пăхăнтарни пулмаллине пĕлтерет» (çавăнтах, стр. 131).

Сталин юлташăн çак кăтартăвĕсем пирĕн партишĕн закон пулса тăчĕç. Вĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Ленин—Сталин партийĕ социализмăн аслă çĕршывĕн пурнăçĕнчи пур ĕçсенче те ертсе пырас рольне вăйлатсах тата нăлăлатсах пырать.

* * *

Сталин юлташ хăйĕн «Ленинизм ыйтăвĕсем пирки» ятлă кĕнекине—ССР Союзĕнчи социализм строительствин законĕсем çинчен калакан кĕнекене — пырса кăларнăранпа 15 çул иртрĕ. Çак кĕнеке социализмăн тăшманĕсене çĕкĕрмеллех çапрĕ, вăл установка панă, ăна, парти установки туса, партин пур членĕсем те обязательнă пурнăçа кĕртсе пымалли закон туса, ырласа йышăннă («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ», чăвашла изд., стр. 334). Пирĕн çĕршывра социализм тумалли çак установкăна ĕнтĕ пурнăçа кĕртнĕ.

Ленин социализм пĕр çĕршывра çĕнтересси çинчен вĕрентнине Сталин юлташ малалла аталантарса тата пуянлатса пычĕ. Ку тĕлĕшпе унăн çак ĕçĕсем: «Пирĕн партири социал-демократла сулăнчăк çинчен», «Тата тепĕр хут пирĕн партири социал-демократла сулăнчăк çинчен», комсомолец Иванов сырăвĕ çине панă ответ уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Партин XVIII съездĕнче Сталин юлташ пирĕн çĕршывра, капитализмлă йĕриташлăх пур пулин те, коммунизмăн çӳлти сыпăкне тума май пурри çинчен каларĕ. Ку вăл марксизм-ленинизм теорине хывнă пысăкран та пысăк çĕнĕ вклад пулса тăрать.

Капитализмлă йĕриташлăх пур пирки, социализм пирĕн çĕршывра татăклăнах çĕнтерес задача пурнăçа кĕмен-ха. Çавăнпа та, совет халăхĕ социализмшăн кĕрешсе пит пысăк çĕнтерӳсем тунă пулин те, лăпланса ларма юрамасть. Пушшех те хальхи вăхăтра, тĕнчере империализмлă иккĕмĕш вăрçă пушарĕ ялкăшса çуннă чухне, хамăрăн тăван çĕршывăн оборонăпа хуçалăхлă хăватне ӳстерсе пыни кирлине, хамăрăн интернационаллă задачăсене пирĕн асрах тытмалла. ССР Союзне—пĕтĕм тĕнчери йĕçыннисен тăван çĕршывне—пирĕн мĕнпур майсемпе тĕреклетсе пымалла.

Г. ГАК.

Оборонăллă çĕнĕ фильмсем

1941 çулта Мускаври, Ленинградри, Киеври тата Çĕпĕрти киностудисем оборонăллă çĕнĕ, интереслă кинофильмсем кăларас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнаççĕ.

«История русской артиллерии» ятлă военно-популярнăй фильма производствăна панă та ĕнтĕ, вăл фильм вырăс артиллерисчĕсен чаплă çĕнтерӳвĕсем çинчен, боевой артиллери техники аталанса пыни тата вăл хальхи вăхăтра мĕнли çинчен каласа паракан илемлĕ киноочерк. «Героические страницы русского военно-морского флота» ятлă фильм кăларас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ те ĕнтĕ.

Çитес çывăх вăхăтрах зрительсем «Парашют» ятлă фильма курĕç, вăл фильм вырăссен пĕрремĕш парашютне шухăшласа кăларнă çынăн—Котельниковăн ĕçĕсем çинчен, парашют спорчĕн историйĕ тата парашютпа мĕнле усă курни çинчен каласа парать.

«Собака — на войне» ятлă фильм тухать, вăл фильм çарти йытăсен служби çинчен каласа парать.

1941 çулта Хĕрлĕ Çарăн инженернăй частĕсен ĕçĕсем çинчен кăтартса паракан «Заграждение и разграждение» тата «Способы военных переправ» ятлă фильмсене ӳкереççĕ. Вĕренӳ пособийĕсем вырăнĕнче шутланакан фильмсене те чылай кăларма пăхнă. Вĕсен шутĕнче — «Курс ПВХО», «Воздушная тревога», «Пулеметы», «Планерная подготовка», «Моряк» ятлă фильмсем.

Спорт çинчен те чылай фильмсем кăлараççĕ, вĕсем çавтери интереслă пулмалла. Хĕрлĕ Çар боецне йĕлтĕрпе ӳреме вĕрентмелли курса, йĕлтĕрсеме çапăçусенче усă куркинне, йĕлтĕр çорчĕн техникипе приемĕсене кăтартса паракан кинокартина ӳкереççĕ. Футболистсем физкультура ĕçне вĕренни тата вăйăн тактикине вĕренни çинчен «Футбол» ятлă фильмăн иккĕмĕш серийĕ кăтартса парать, ку фильмра совет футболисчĕсене Ильин, Семичастный, Федотов, Фролов тата ытти юлташсене ӳкернĕ. Çăмăл атлетика енĕпе ССР Союзĕн чемпионĕсеме рекордсменĕсене — Демина, Мидиса, Туровăна, Головкина, Пугачевскине, Степанченкона «Легкая атлетика» фильмра курма пулать. Çак çулта «Фехтование» тата «Спортивная гимнастика» ятлă учебнăй фильмсем кăлараççĕ. (ТАСС).

Вырăнти чĕртавартан хатĕрлекен продукци

КАУНАС. Кунта трикотаж отхочĕсенчен тĕрлĕ товар хатĕрлекен фабрика тума шутлаççĕ. Артельсем пĕтĕмĕшпех вырăнти чĕртаварпа ĕçлеме тытăнаççĕ. Промышленносрн отходсенчен вĕсем никельпе витнĕ çĕçĕсем, пилĕкăсем, кашăксем туса хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче Вильнюсра оптика приборĕсен артелĕ куçлăх оправисем кăларма тытăннă, халиччен вĕсене Литвăна ютсĕршывсенчен кӳрсе пынă. Республикăра кирпĕч тăвакан тăватă çĕнĕ завод тума тытăннă. Кăçалхи çул ӳрĕ кирпĕч тăвакан 11 завода ĕçе ярасçĕ. Литвари фанера тăвакан пĕртен-пĕр фабрика 7 хут пумайрах продукци кăларма тытăнать.

Колхозсенчи строительство

БАРНАУЛ. Алтай крайĕнчи колхозсенче строительство ĕçĕ вăйлăн сарăлса пырать. Халĕ унта переселенецсем валли 815 çурт туса лартнă. Выльăх-чĕрлĕх фермисенче лаша витисем, выльăх картисем, пăру, сурăх тата сысна витисем 1.700 таран çĕнĕрен тăваççĕ. Çавăн пекех, çĕнĕрен тата 3 пин çурт: выльăх витисем, тырă типĕтмелли çуртсем, витнĕ итемсем, электростанцисем, армансем, клубсем лартма палăртнă. 11 колхозра водопровод хывасçĕ, 30 колхозра кӳлĕсем чавнă.

В. В. КУЙБЫШЕВ

(Вилни 6 çул тултарнă тĕле)

Ултă çул каялла пирĕн парти пысăк çухату турĕ. 1935 çулти январĕн 25-мĕшĕнче большевикла партин калама çук паллă деятелĕ, рабочи класс ĕçĕшĕн, коммунизм ĕçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ борец, Ленинпа Сталинăн шанчăклă ученикĕ тата соратникĕ Валериан Владимирович Куйбышев вилчĕ.

В. В. Куйбышева совета хирĕçле сылтăм-троцкистла блокри ирсĕрсем вĕлернĕ, вĕсем сăтăрçă-врачсем пулăшнипе унăн юнне, унăн чĕрине нумай вăхăт хушши наркăмăшпа антратса пырса вĕлернĕ.

Куйбышев юлташ хăйĕн пĕтĕм пурнăçне рабочи класс ĕçĕшĕн панă. Вăл 1904 çулта — 16 çулти çамрăк чухнех, РСДРП-ăн Омск организацине кĕрет те, тӳрех большевиксемпе пĕрле ĕçлеме пуçлать. Вăл вăрттăн ĕçлекен кружоксене ертсе пырать, рабочисем, салтаксем тата вĕренекенсем хушшинче агитацилле ĕçе активлăн туса пырать.

1905 çулта кĕркунне В. В. Куйбышев Петербургра —çĕкленсе пыракан революцин центрĕнче, кунта вăл большевикла ĕçе активлăн туса пырать. Çак ответлă тапхăрта В. В. Куйбышев партин чи кирлĕ те пысăк порученийĕсене пурнăçа кĕртет. Вăл вăхăтра декабрьти хĕçпăшаллă восстание хатĕрленнĕ Мускаври рабочисен дружинисем валли хĕçпăшалсемпе боеприпассем тиесе ярать.

Вырăссен пирвайхи революцийĕ хыççăн пуçланса кайнă йывăр реакци вăхăтĕнче, террор алхасса кайнă тапхăрта, империализмлă вăрçă çулĕсенче В. В. Куйбышев — яланах тата пур çĕрте те — вĕçне çитиех çирĕп ленинец, самодержавин хаяр тăшманĕ пулнă. Патша влаçĕсем ăна хаярăн хĕсĕрленĕ. 1906—1916 çулсем хушшинче В. В. Куйбышева сакăр хут арестленĕ вăл, Çĕпĕрĕн чи инçетри вырăнĕсенче тăватă хут ссылкăра пулнă. Ана йĕрлесе пурăнакан патша охранкин агенчĕсенчен пытанса, вăл пĕр хутчен мар ссылкăсенчен тухса чупнă.

В. В. Куйбышев ссылкăсенче те революциллĕ ĕçе ывăнма пĕлмесĕр туса пырать. Большевиксене пĕр çĕре пĕтĕçтерсе, вăл меньшевиксемпе эсерсене хирĕç кĕрешет, ссылкăна янисем хушшинче политикăллă вĕренĕве йĕркелесе ярать, вырăнти халăхпа çыхăну тытассине йĕркелет, пухусемпе демонстрацисем тăвать, ссылкăран тарас ĕçе организацилет.

Февральри буржуаллă-демократилле революци вăхăтĕнче В. В. Куйбышев черетлĕ ссылкăна, вилĕмлĕ Турухан крайне кайма тухнă çул çинче пулнă.

В. В. Куйбышев Самара тавăрăнать, революциллĕ ĕçе вăл юлашки тапхăрта çак хулара туса пынă пулнă, рабочисем вăл Самара килессине тӳсеймесĕр кĕтнĕ. Куйбышев юлташ хăйĕн пĕтĕм вĕресе тăракан чун-хавалĕпе хĕрӳллĕн ĕçлеме тытăнать. Большевикла организацине ертсе пырса, вăл рабочисене тухса организацилет, вĕсене буржуазине сирпĕтсе антарассишĕн, Советсен влаçĕшĕн кĕрешме хатĕрлет. Самара — революциллĕ Петроград сумне чи малтан хутшăннă хуласенчен пĕри пулнă. 1917 çулти ноябрĕн 5-мĕшĕнче ĕнтĕ Самарта совет влаçĕ туса та хунă пулнă. Куйбышев юлташа Революциллĕ Комитет председательне, унтан вара — Советсен губернири Исполнительный Комитет председательне суйланă.

1918 çулта Алăл тăрăхĕнче чехословаксен пăлхавне путарса лартас ĕçре В. В. Куйбышевăн ролĕ калама çук пысăк пулнă, çав пăлхав çине империалистсем нумай шанăçсем хунă.

Граждан вăрçин пĕтĕм çулĕсенче В. В. Куйбышев фронтсенче пулнă, вăл Хĕрлĕ Çарăн чи паллă политикăллă руководителĕсенчен пĕри пулса ĕçленĕ. Фрунзе юлташпа пĕрле В. В. Куйбышев Хĕвелтухăç тата Туркестан фрончĕсенче колчаковецсемпе интервентсене çапса салатас тĕлĕшпе активлăн ĕçленĕ. Вăтаçĕр Азири халăхсене белогвардеецсемпе интервентсенчен хăтарни унăн ячĕпе пĕр уйрăлми çыхăнса тăрать. В. В. Куйбышев хăйĕн пурнăçне те хĕрхенмесĕр, йывăрлăхсенчен хăраса каялла чакмасăр, яланах чи малти тата хăрушă вырăнсенче пулнă. Вăрçăлла тытăçусен чи хăрушă самăнчĕсенче вăл час-часах малти шеренгăсенче пулса, хăйĕн примерĕпе рядовой боецсене хавхалантарса пынă.

Граждан вăрçи пĕтнĕ. Парти В. В. Куйбышев парти тата государство ĕçĕн чи ответлă участкĕсене ярать. 1921 çултан пуçласа вăл парти Центральный Комитечĕн составне кĕрет, 1927 çулти декабрьтен пуçласа — вăл Политбюро членĕ.

В. В. Куйбышев пирĕн государство тата хуçалăх строительствин пысăкран та пысăк организаторĕ тата руководителĕ пулнă. Халăх Хуçалăхĕн Высший Совет (ВСНХ) Президиумĕн членĕ тата Главэлектро начальникĕ пулса ĕçлесе В. В. Куйбышев совет çĕршывне электрификацилемелли ленинла генийлĕ плана (ГОЭЛРО) пурнăçа кĕрет. Вăл тӳрремĕнех ертсе пынипе Волховстрой, Шатура, Кизел тата Кашир электростанцийĕсен — Совет государствинчи энергетикăн хăватлă базин çак малтанхи электростанцисен строительствине пуçланă.

Партин XII съезчĕ йышăннă решени тăрăх ЦКК — РКИ туса хурсан ăна ертсе пыма В. В. Куйбышева уйăрса ларнă, вăл партишĕн те тата халăхшăн та кристалл пек тăс большевик, Ленин — Сталин партийĕн ĕçне вĕçĕмсĕр парăннă çын пулнă, вăл социализмăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç пĕр килĕшмесĕр кĕрешсе пынă. Парти ретĕнчи пĕрлĕхе сыхласа тăрса, вăл «рабочи оппозицине», троцкистсене, сылтăм перерожденецсене, буржуаллă националистсене тата халăхăн ытти тăшманĕсене те пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе тăкнă, вăл вĕсен «теорийĕсемпе» лозунгĕсен контрреволюциллĕ тупсăмне уçса палăртнă, вĕсен предателле маневрĕсемпе ирсĕр шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларнă, вĕсен преступленийĕсене ĕçĕсене тупса палăртнă.

Куйбышев юлташ совет учрежденийĕсенчи бюрократизмпа волокитăна ывăнма пĕлмесĕр тăпăлтарса пынă, государствăн тĕрĕс те йĕркеллĕ ĕçлекен аппаратне тăвассишĕн кĕрешнĕ.

1926 çулта пирĕн ретрен вилĕм совет промышленноçĕн боевой руководительне Феликс Дзержинскине илсе кайрĕ. ВСНХ председателĕнче ĕçлеме Дзержинский вырăнне парти Куйбышев юлташа лартать.

Сталин юлташăн çак кăтартăвĕсем тăрăх вăл пĕрремĕш пятилетка планне — пирĕн çĕршыва социализмла çĕнетесе урăхлатмалли аслă ĕçсен планне туса хатĕрлес ĕçе ертсе пырать.

Куйбышев юлташ хăйĕн мĕнпур вăйне, хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕсене индустриализацин сталинла планне пурнăçа кĕртес ĕçе парать, промышленноçăн малта пыракан тĕп предприятийĕсен проекчĕсене туса хатĕрлес ĕçе тӳрремĕнех хутшăнса ĕçлет. Валериан Владимирович çĕнĕ стройкăсем тумалли вырăнсене хăй суйласа тупать, Магнитогорскăн, Кузнецкстройăн, Днепростройăн, Сталинградри трактор завочĕн, Горькири автозаводăн тата çĕршыв индустрийĕн ытти гиганчĕсен никĕсĕсене хывнă чухне пĕрремĕш чулсене хăй хурать.

Ун хыççăнхи çулсенче, Госплан председателĕ тата СССР Совнарком председателĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра В. В. Куйбышев сталинла иккĕмĕш пятилетка планне туса хатĕрлес ĕçе активлăн хутшăнать.

В. В. Куйбышев социализм çĕршывĕн хуçалăх хăватне тĕреклетессишĕн, ĕççыннисен материалла-культурăллă ырă пурнăçне лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнă, вăл çамрăк рабочисемпе колхозниксене наукăпа техникăна вĕренсе алла илме, хамăрăн çĕршыва вĕренме хĕрӳллĕн чĕннĕ, çапла тусан çĕршывăн калама çук нумай пуянлăхĕсене халăхшăн, социализмшăн усă кӳмелле тума пулать, тенĕ вăл.

«Наукăпа техника малалла мĕн чухлĕ ытларах кайĕç, — тенĕ В. В. Куйбышев социализм строительствинчи наукăпа техника работникĕсен Пĕтĕм Союзри ассоциацийĕн Мускав облаçĕнчи конференцийĕнче, — вĕсем мĕн чухлĕ ытларах çӳллĕшсем çĕнсе илĕç, вĕсем этемлĕхе çавăн чухлĕ ытларах парĕç, социализм тăвакан халăха вĕсем ăпаласен, изделисен тата таварсен ӳссе пыракан хисепĕпе çавăн чухлĕ вăйлăрах пуянлатĕç, çавсем вара çынăн пурнăçне тĕпренех улăштарĕç... Наука пирĕн çĕршывра социализм тăвакан пролетарисем миллионшар массисен опытне илмест пулсан, вăл наука çав çӳллĕшсене çĕнсе илме пултараймасть».

Пĕр вырăнта пăчланса ларнине, хӳрере сĕтĕрĕнсе пынине, мăнкăмăлланнине тата лăпланса ларнине Валериан Владимирович пĕр хĕрхенмесĕр уçса палăртса хаярăн

Колхоз агрономĕ

Валентина Дрезина Çĕрпӳ хулинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ĕçлеме пуçлани нумаях пулмасть-ха. Пурĕ те икĕ уйăх çеç иртнĕ. Апла пулин те вăл колхозри ĕçпе паллашса ситнĕ.

Агроном Дрезина юлташ юлашки вăхăтра мĕнле ĕçсем туса ирттернине тата вăл çак кунсенче тăвакан ĕçсемпе интереслентĕмĕр.

— Ĕçлеме тытăнни нумаях пулмасть. Ытла нимех те тăвайман-ха. Мухтанмаллиех çук. Пирĕн ĕç результачĕсем кĕркунне паллă пулĕç ак...

— Плансем тăвас тĕлĕшпе чылай хушă ĕçлесе лартăр. Çавăн çинчен каласа кăтартар-ха вĕсене,—каласăва хутшăнчĕ колхоз канцелярийĕнче ĕçлесе ларакан колхозница.

Колхоз вăл социализмлă шултра хуçалăх. Кунта плансăр ĕçлеме çук. Агроном çакна шута илсе чи малтан колхозри ĕç вăйăсене хисепе илсе тухнă. Кашни лаша пуçне тивекен ĕç нормине туса çирĕплетнĕ. Уйрăмăн кашни колхозник хĕл вăхăтĕнче мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса план тунă.

— Çураки тата кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ирттермелли плана туса хатĕрлерĕри-ха?

— Ку ыйтăва эсир пĕчĕк ыйту тетĕр-и мĕн? Пурнăç малалла кайса пырать. Иртнĕ çулсенчи нормăсем кивелсех пыраççĕ. Ĕç нормисем çирĕплетнĕ чухне малта пыракан колхозсенчи колхозниксен опычĕсене шута илмелле. Эпир ку тĕлĕшпе хамăр колхозра çирĕп йĕрке тума ĕмĕтленетпĕр. Нумаях та пулмасть колхоз правленийĕ мана Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз ĕçĕпе паллашма ячĕ. Икĕ кун хушши пурăнса вĕсен паха ĕçĕсемпе нумай паллашрăм. Шкулта вĕренсе тата хамăр колхозра ĕçлесе илнĕ пĕлӳ сумне çĕнĕ пĕлӳ хушрăм.

Кольцовка колхозĕ кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 200 пăт тĕштырă туса илес задача лартнă. Мĕнле майпа тата мĕнле ĕçлесен илме пулать çавăн чухлĕ тырă? Ăна вĕсем пĕтĕмпех планра кăтартса панă. Пирĕн ку колхозран вĕренмелли нумай-ха, — тет агроном Дрезина.

Тĕрĕс калать вăл. Колхозниксем ялхуçалăх ĕçĕнчи çĕнĕ меслетсене хăнăхсах пыраççĕ. Практикăллă ĕçре ӳсеççĕ вĕсем. Колхоз руководителĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсем малта пыракан колхозниксен опычĕсем тăрăх ĕçлемелле. Валентина çавăн пек тума шутлать те. Колхозăн акмалли çĕр 719 гектар. Кашни лаша пуçне 20 гектар тивет. Вăй-питти колхозниксем 70 сыпăран çеç иртеççĕ. Çаксене шута илсе ĕнтĕ нормăсене чылаях ӳстермелле пулать.

Валентина Дрезина çуракине ирттермелли плана малта пыракан орденлă колхозри пек тума хатĕрленет. Çĕнĕ нормăсем туса çирĕплетсен колхоз пур ĕçре те лайăх ĕлкĕрсе пыракан пулĕ.

Пĕрмаях вăрçатчĕç Çĕрпӳ колхозне. Кая юлса пынăттăн вăрçнă ăна. Иккĕ çул каялла тĕштырă туса илесси те, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетесси те ăнса пыман. Халĕ пĕтĕмпех урăхла. Колхозниксем тăрăшса ĕçлесе хăйсен колхозне районра малта пыракан колхозсен шутне кăларнă. Малашне татах та лайăхрах ĕçлеме, пысăк çитĕнӳ тума пултараççĕ. Халĕ вĕсен хăйсен агроном пур.

Колхоз иртнĕ çулта вăтам шутпа гектартан 10 центнер тĕштырă туса илнĕ. Кăçал Кăтраккассинчи «Пионер» колхозпа социализмлă ăмăртăва тухса 120-шер пăт туса илме обязательство илнĕ. Çакăн чухлĕ тĕштырă туса илес тесен çине тăрса ĕçлени, агротехникăна кулленхи ĕçре пурнăçа кĕртсе пыни кирлĕ. Иртнĕ çулта уя 2.600 лав тислĕк кăларнă пулсан кăçал 5000 лав турттарса кăларма, 14 тонна минеральнăй удобренисем кӳрсе килме, ытти тĕрлĕ удобренисене те кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме пулнă. Пур тĕрлĕ вăрлăхсене те сортласа хатĕрленĕ, вĕсен пахалăхне вăрлăх лабораторийĕнче тĕрĕслеттернĕ. Сăнав тăвас тĕлĕшпе фосфорит çăнăхĕ, суперфосфат, кали тăвăрĕ пĕрле хутăштарса тата уйрăм участок çине çав удобренисенех тисĕкпе хутăштарса тăкма шутлаçĕ. Кăçал пуçласа, чĕрĕк гектар çине июль уйăхĕнче çĕрулми лартма шутлаççĕ.

Колхозăн агроном пур, анчах зоотехник çук. Çавăнпа та ĕнтĕ агроном Дрезина вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçне интересленмесĕр тăма пултараймасть. Хăйсен колхозĕ вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçлĕше тунă çитĕнӳсемпе мухтанать. Ене, лаша, сысна, сурăх, чăх-чĕп фермисем пур. Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур вылăхсем онĕпе те тултарнă. Иртнĕ çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.300 литр сĕт суса илнĕ. Çамрăк вылăхсене лайăх пăхса ӳстернĕ. Колхоз вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнма пултарать.

— Кăçал пирĕн колхоз кашни ĕнерен 3000 пин литр сĕт суса илес задача лартрĕ. Çавăнпа та ĕнесене лайăх пăхмалла, лайăх тăрантармалла пулать. Эпир вĕсене валли апат çителĕклĕ уйăрса хăварнă,—тет агроном.

Кăçал вылăх-чĕрлĕх шучĕ иртнĕ çулхинчен нумай пулать. Çарансене çĕнетсе лайăхлатаççĕ. 3 гектар çине 89 лав лаша тислĕкĕ турттарса кăларнă, ăна çуркунне сапаласа тăкаççĕ 3 гектар çарана çуркунне сӳреме пăлăртнă. Çак ĕçсене пурнăçласан колхоз утă ытларах туса илме пултарать.

Колхоз кăçал 15 гектар çинче тĕрлĕрен пахча-çимĕçсем лартса тума йышăннă. Çак шутран чĕрĕк гектар çинче арбуз акса тума ĕмĕтленеççĕ. Çĕнĕ ĕç. Агроном вĕрентни тăрăх ĕçлесен колхозниксем çак ĕçе те хăнăхса çитĕç.

Валентина Петровна Дрезина хăйĕн пĕлĕвне колхозниксене пама тăрăшать. Стахановла шкулта 15 çын, агрокружокра 20 çын вĕренеççĕ. Вĕсене Дрезина социализмлă çĕр ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе, социализмлă ялхуçалăхне аталантарса пымалли майсемпе паллаштарать. Колхозниксем агротехникăпа зоотехникăна вĕренсе çитсен çĕнĕ çĕнĕрӳсем тума пултарĕç. Çакна ĕмĕтленет агроном Дрезина юлташ.

Т. МАЙОРОВ.

Çуракине хĕрсе хатĕрленеççĕ

— Колхоза лайăх ертсе пырас тесен, унăн председателĕн политикăллă, çăвăн пекех агротехникăллă пĕлӳлĕх енĕпе колхозниксенчен маларах тăмалла, колхозниксемпе таччăн сыхăнса ĕçлемелле, вĕсем калanine итлемелле,—тесе каласа парать Çĕрпӳ районĕнчи «Балтиец» колхоз председателĕ, коммунист Васильев юлташ.

Тĕрĕс калать вăл. Колхоз производствинче пысăк çитĕнӳсем тăвас тесен колхозниксен массине пĕлсе ертсе пымалла. Çак енсем Васильев юлташăн çителĕклĕ. Иртнĕ çулта колхоз вăйлă тырпул туса илчĕ, ялхуçалăх çулне пысăк пахалăхпа вĕçлерĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă, пахча-çимĕçсем йышлăн илчĕç.

«Балтиец» колхоз тĕштырă туса илес тĕлĕшпе кăна мар, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе те аван ĕçлет. Колхозра тăватă ферма. Вĕсем валли выльăхсем планпа пăхнă чухлĕ илсе çитернĕ. Выльăх апачĕ, ăшă витесем çителĕклĕ.

Васильев коммунист ертсе пыракан колхоз кăçалхи çуракине те тĕплĕн хатĕрленет. Акма чи лайăх вăрлăхсем хатĕрленĕ, вĕсене сортласа тасатнă. Ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ. Колхозниксем кăçал кашни гектартан 120 пăт тĕштырă туса илес задача лартнă. Çавăнпа удобренисем хатĕрлес тата вĕсене тĕрĕс сыхласа усрас ĕçе уйрăмăнах лайăх йĕркеленĕ.

Халĕ бригадăсенче торф кăларса хатĕрлесси ăнăçлăн пырать. Ку вăхăтлен пурĕ 350 тонна торф кăларнă. Ытти удобренисене те йĕркеллĕ пухаççĕ. Кунта иккĕмĕш уйăх ĕнтĕ агрокурсок ĕçлет. Кружока Васильев юлташ çăвăрать ертсе пырать.

Н. МИРОНОВ.

Кесовогорскри пионерсен пуçарăвне анлăн сармалла

Иртнĕ çулти ноябрь уйăхĕнче Кесовогорск (Калинин облаçĕ) ялĕнчи пионерсемпе шкул ачисем «Пионерская правда» хаçат урлă Совет Союзĕнчи мĕнпур пионерсемпе вĕренекенсене çамрăк вылăхсене шефа илсе пăхса çитĕнтересси çинчен чĕнсе каларĕç.

Ачасем вылăхсене пăхса ӳстерни, вĕсем мĕнле ӳссе пынине сăнани шкулта вĕреннине практикăпа таччăн пăхăнтарса пыма пулăшать. Ачасем çайсен пĕлĕвне çĕнĕ япаласемпе пуянлатса пыраççĕ.

Халĕ кесовогорецсен пуçарăвĕ пирĕн çĕршывра массăллăн сарăлса пырать.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ Кесовогорскри ачасен пуçарăвне ырлать. Автономлă республикăсенчи çутĕç халăх комиссариачĕсене, облаçсемпе крайсенчи çутĕç пайĕсен заведующийĕсене шкул директорĕсемпе, учительсемпе çак ыйтупа канашлу туса ирттерме хушнă. Канашлăва ирттернĕ çĕре çĕрĕç пайĕсен работникĕсене, ВЛКСМ райкомĕсен представителĕсене те явăстармалла.

Шкул директорĕсем биолог-учительсемпе тата вожатăйсемпе пĕрле вĕренекенсен пухăвĕсене туса ирттермелле. Çак пухусенче Кесовогорскри пионерсем чĕнсе каланă сырăва сӳтсе-явмалла, колхозсенчи çамрăк вылăхсене шефа илсе ĕçлес тĕлĕшпе мĕн туса ирттермелли çинчен татăклă мероприятисем палăртмалла. Ачасем хушшинче вылăх-чĕрлĕхсене таса тытасси, тăрантарасси тата вĕсен чир-чĕрĕсемпе кĕрешесси çинчен лекцисем, каласусем туса ирттермелле. Çуллахи вăхăтра шеф ĕçне шкул участокĕнче ĕçлесе пырассипе таччăн çыхăнтармалла.

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх, шкул ачисемпе пионерсен шеф ĕçне вĕренӳрен пушаннă вăхăтсенче туса пымалла.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыраççĕ

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Древкомбинатри 4-мĕш номерлĕ цех коллективĕ январь уйăх планне 112 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлас тесе халĕ рабочисемпе работницăсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать.

Амăртура уйрăмăнах Егорычев, Никулин, Голисенко юлташсен сменисенче ĕçлекенсем паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Сăмахран, Егорычев юлташ сменинчи стахановецсем Таратинпа Бразюткин юлташсем нормăна кашниех икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Шуганова, Михайлова, Филиппов, Таратин юлташсем те юлашки вăхăтра хăйсем çине илнĕ обязательствăна ытлашшипех пурнăçласа пыраççĕ. Акă, январĕн 19-мĕшĕнче Шуганова юлташ нормăна 200 процент, Михайлова юлташ 180 процент тултарчĕç.

Çак кунсенче цехра стахановла шкултан 60 рабочи вĕренсе тухрĕç. Вĕсем те производствăра лайăх результатсем кăтартаççĕ.

Вас. ПАВЛОВ.
Хар. ЛИСИН.

Хаçатра тухнă материалсем тăрăх

„Прогул мĕнле пулать“

«Чăваш Коммуни» хаçатăн кăçалхи 4-мĕш номерĕнче Ив. Мосеевăн «Прогул мĕнле пулать» ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ.

Калининский районри прокурор статьяра асăннă фактсем пурте тĕрĕс, тесе пĕлтерчĕ. Райсовет исполкомĕ ыйтăннă тăрăх, чăнах та лавкасем ирхине 9 сехетрен пуçласа кăçхине 7 сехетчен ĕçленĕ. Ку ĕнтĕ район центрĕнче ĕçлекенсемшĕн питĕ тĕлĕрĕ вăхăт. Çавăнпа та служащисенчен ĕç вăхăтĕнче лавкасене çӳресе прогул тăвакансем те пулнă.

Районри прокурор райсовет исполкомĕн çав тĕрĕс мар решенине пăхăнăçа кăларма исполком умне ыйту лартнă.

Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Канаш станцинчи депо коллективĕ производствăра паха çитĕнӳсем туса пырать. **Укерчĕк çинче:** депори производство командирĕсем (сулахайран сылтăмалла) — депо начальникĕн ремонт енĕпе ĕçлекен заместителĕ М. Е. Поляков, партбюро секретарĕ А. А. Крючков, депо начальникĕн заместителĕ К. Е. Александровский.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Иртнĕ çулти итогсемпе кăçалхи задачăсем

Нумаях пулмасть финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу иртнĕ çулти итогсемпе финанс ĕçĕн кăçалхи задачисем çинчен сӳтсе-яврĕ.

Пирĕн бюджетра социализмлă хуçалăхран пухăнакан доход тĕп вырăн пышăнса тăрать. Анчах финанс орăнĕсем, уйрăмăнах госдоход инспекторĕсем, çавнашкалах хуçалăх организацисем начар ĕçленĕ пирки пирĕн республика государство дохочĕ енĕпе 1940 çулти плана тултараймарĕ. Пирвайхи виçĕ кварталсенче плана 83—95 процента çити кăна тултарнă, юлашки, тăваттăмĕш кварталти плана 102,7 процент, пĕтĕмĕшпе илсен, çулталăкри плана 92,8 процент кăна тултарнă. Урăхла каласан, республика бюджетне РСФСР государство бюджетне 16,5 млн. тенкĕ уçса пухса парайман. Çакă вăл бюджетпа пăхнă 1940 çулти ӳссем валли вăхăтра уçса-тенкĕ парассине нумай чăрмантарчĕ.

Иртнĕ çулта госдоходсен планне пĕтĕмпе те 4 район кăна тултарнă: Улатăр районĕ—109,7, Йĕпреç—101,8 Çĕрпӳ—100,3 тата Шупашкар хули—102,5 процент. Первомайский, Етĕрне, Хĕрлĕ Чутай, Кувакино тата Октябрьский районсем ытла та япăх ĕçлерĕç. Вĕсем плана 60—80 процент кăна тултарнă.

Етĕрнери çу тата спирт завочĕсем. Сĕнтĕрвăрринчи спирт завочĕ производствăлла программăсене тултарманни тата Шупашкарти ликерпа эрех заводĕнчи хуçасăрлăх, заготзерно енĕпе пысăк пахалăхлă çăнăх кӳрсе килессине тултарманни, табак, пир-авăр тата МТ Станцисем нефтебазăсенчен çунтармалли япаласем фондпа пăхнă чухлĕ кӳрсе килейменни—çаксем ĕнтĕ 1940 çулти госдоход планне тултарма чăрмантарса тăчĕç. Анчах финанс орăнĕсем ĕçе оперативлă ертсе пынă пулсан, хуçалăх орăнĕсен ĕçне тăтăшах тĕрĕслесе тăнă пулсан, çав чăрмавсене вăхăтрах пĕтерме май пулнă пулĕччĕ, вара хуçалăх организацисем те лайăхрах ĕçленĕ пулĕччĕç.

Партин XVIII съезчĕ вырăнти промышленноçпа промкооперацине аталантарса пыма хушса хăварнă. Çак директива пурнăçа çителĕксĕр кĕрсе пырать. Наркоматсем, финорăнсем тата кооперăци союзĕсем вырăнти промышленноçăн предприятийĕсен, промысла кооперацин артелĕсен ĕçĕсене, уйрăмăнах вĕсем куллен кирлĕ таварсене ытларах туса кăларас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине çителĕклĕн контроль туса пыман. Çакă та госдоход планне тултарма нумай чăрмантарчĕ.

Иртнĕ çулти йăнăшсене шута илес пулать. Кăçал вĕсем текех ан пулччăр. Хуçалăх организацисем тата предприятисем хăйсен производствăлла программисене тултарнине тата туса кăларнă продукцине потребительсем патне çитерсе панине финанс орăнĕсен тăтăшах контроль туса пымалла. Кашни хуçалăхăн, предприятин ĕçĕсене, вĕсен экономикине тĕплĕн пĕлмелле, вĕсене вырăнти промышленноçпа промкооперăци енĕпе усăсăр выртакан резервсене шыраса тупма пулăшмалла. Хуçалăх организацисенче расчетпа гӳлев дисциплинине çирĕплетес пулать, вĕсем бюджета кĕмелли укçа-тенкĕне тытса ан усраччăр, вĕсен недоимкăсем пачах ан пулччăр.

Финанс работникĕсен, уйрăмăнах госдоход инспекторĕсен, отчетсене тата налог расчечĕсене вăхăтра тата тĕплĕн тĕрĕслесе пымалла; кабинетсенче сахалтарах лармалла, хуçалăх организацисемпе предприятисенче ытларах пулас пулать.

Укçа-тенкĕ пухмалли плана та иртнĕ çулта кварталтан квартала тултарса пырайман. Юлашки çурçулта кăна плансене ытлашшипех тултарнă. Çак çитĕнĕве тума финанс работникĕсене парти тата совет организацийĕсем нумай пулăшрĕç. Тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармалла мар. Анчах вăл сисĕнме те пуçларĕ. Кăçалхи пĕрремĕш кварталăн малтанхи кунĕсенче финанс планне тултарассишĕн кĕрешесси чылаях начарланчĕ.

Иртнĕ çулта налог политикине пăснă фактсем те сахал мар пулнă. Уйрăмăнах Первомайский, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Канаш тата Чкаловский районсене çамăллăх туса панă, единоличниксене государство умĕнчи тарăмсене вăхăтра тӳлемен, хăшпĕр финанс работникĕсем унпа килĕшсе гăнă. Хăшпĕр çĕрте налог законĕсене пăснă. Уйрăм единоличниксене недоимкăсенчен ним сăлтавсăрах хăтарнă, е вĕсем çине тивĕслипе налог хуман — сахалтарах хунă. Налогсене юриех тӳлемесĕр тăракансене каçарнисем те пулнă.

Налог законĕсене тата революциллĕ законлăха пăсни кăçал пачах та ан пултăр. Единоличниксемшĕн нименле çăмăллăх та пулмалла мар. Вĕсен государство умĕнчи мĕнпур тӳлевсене вăхăтра тата пĕтĕмпех парса татмалла.

Финанс ĕçĕн пĕтĕм пахалăхне хăвартасси кăçалхи чи пысăк задачăсенпе пĕри пулса тăрать. Финанс работникĕсен судпа прокуратура работникĕсемпе тачă сыхăну тытса ĕçлемелле.

Кадрсене, уйрăмăнах налог агенчĕсене суйласа илесси, вĕсен ĕçĕсене тăтăшах контроль туса пырасси тивĕçлĕ вырăнта мар. Çавăн пирки ĕнтĕ агентсенчен чылайăшĕ хăйсен ĕçне çителĕклĕн туса пыраймаççĕ, çитменнине тата уйрăм агентсем недоимщиксемпе пĕрлешсе кайнă, вĕсем единоличниксене хӳтлесе тăма тытăннă. Хăшпĕр агентсем ĕççыннисенчен пухнă укçа-тенкĕне хăйсен кăсăйне чикнĕ, государство укçине çаратса пураннă. Малашне кун пек киревсĕр ĕçе чăтса тăма пултараймастпăр. Налог агенчĕсем пулса ĕçлеме тӳрĕ кăмăл-шухăшлă, халăх пурлăхне перекетлесе сыхласа усрассишĕн, партипе правительство ĕçĕнĕн пĕтĕм чĕререн тăрса кĕрешекенсене суйласа илмелле, вĕсен ĕçне тăтăшах контроль туса тăмалла.

1940 çулăн иккĕмĕш çурçулленче перекет кассисен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Уйрăмăнах Виççĕмĕш Пятилетка (виççĕмĕш çулхи кăларăм) Заема ăнăçлăн зырнаçтарса тухнă. Заем укçисене пухас плана виççĕмĕш кварталта 110 процент, IV-мĕш кварталта 102 процент тултарнă. Апла пулин те ку ĕç юлса пырать-ха. Çулталăкри плана 93 процент çурă кăна тултарнă. Уйрăмăнах вкладсем енĕпе ĕçсем начар тăраççĕ. Нумай перекет кассисем, комсодсем, заем уполномоченнăйĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Перекет кассисен ĕçне лайăхлатмалла. Ăна тума пирĕн кадрсем, ку ĕçе пĕтĕм чĕререн юратса тăвакан çынсем нумай. Малта пыракан перекет кассисен ĕçĕсем те çавăн çинченех калаççĕ. Советский, Комсомольский, Вăрнар, Йĕпреç, Хĕрлĕ Чутай тата Елчĕк районĕсенчи перекет кассисем вкладсем пухас плана ытлашшипех тултарнă. Сăмахран, Советский районри перекет кассисен хăйĕн планне 328 процент ытла тултарнă. Перекет кассисен темиçе вуншар контролерĕсем политикăллă массăллă ĕçе анлăн туса пырса хăйсен планĕсене кашни кварталта ытлашшипех тултарса пыраççĕ.

Государство страхованнийĕ те финанс ĕçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1939 çултипе танлаштарсан, 1940 çулта страховани ĕçне нумай лайăхлатнă, çапах та ку тĕлĕшпе ĕçсем çителĕклĕ пулса пыраççĕ тесе калама çук-ха. Вылăх-чĕрлĕхсене, тымарта ларакан тырпула, пурлăха ирĕклĕн страхласси начар пулса пырать. Мĕнпур недоимкăсене пĕтермелле, рабочисемпе служащисен, колхозниксен пурнăçне тата пурлăхне ирĕклĕн страхлассине вăйлатмалла.

Финанс работникĕсем партин XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç, кăçалхи пĕрремĕш кварталти планра срокчен тултарма пулчĕç. Илнĕ обязательствăсене большевикла пурнăçа кĕртсе пырас пулать, вĕсем хут çинче кăна тăрса ан юлччăр.

И. ЗОЛОТНИКОВ.

Кĕнекесене çухатса пĕтернĕ

КАЛИНИНО. Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозра вулав çурчĕ начар ĕçлесе пырать. Çавăнпа та кунта колхозниксем хушшинче массăллă ĕçсем питĕ çителĕксĕр. Вулав çуртĕнче ĕçлекенсем час-часах улшăнаççĕ. Çакă вăл ĕçре пысăк чăрмав кӳрет.

Вулав çурчĕ çумĕнче библиотека пур. Иртнĕ çулсенче унта кĕнекесем çителĕклĕ туяннă пулнă. Анчах вĕсене çухатса пĕтернĕ, халь унта 10—15 кĕнекерен ытла та юлман.

Çамрăк ачасем валли вуламалли кĕнекесем пачах çук. Çакăн пирки пуçламăш шкулта 2—3-мĕш классенче вĕренекен ачасене вĕсем ăнланма пултарайман кĕнекесене параççĕ.

Кĕнекесемпе тивĕçлипе усă курасси библиотекăра ĕçлекенсем хăйсен ĕçне тĕплĕн туса пынинчен нумай килет. Вĕсен кĕнекесене вăхăтра пухмалла, кама мĕнле кĕнекесем памаллине шута илмелле.

И. Яковлев.

Физкультура коллективĕсем çук колхозсенчи ГТО комплексĕн нормисене йышăнакан комиссисем

Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа комсомолецсен кросне (ăмăртуне) иртернĕ май, ВЛКСМ Центральный Комитечĕ физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи пĕтĕм союзри комитетне физкультура коллективĕсем çук колхозсенче комсомолăн пуçламăш организацисем çумĕнче ГТО комплексĕн нормисене йышăнакан комиссисем тума сĕнӳ панă пулнă.

Çакăн хыççăн физкультурăпа спорт ĕçĕсен пĕтĕм союзри комитечĕ ятарласа инструкци çирĕплетнĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ комсомолăн районри комитечĕсене физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕпе (инспекторĕпе) пĕрле вунă кун хушшинче комсомолăн колхозсенчи пуçламăш организацисем çумĕнчи ГТО комплексĕн нормисене йышăнакан комиссисем тума тата вĕсене ĕçре практикăллă кăтартусем парса пыма хушнă.

Инструкци тăрăх, комиссисене комсомолец-физкультурниксенчен, ГТО значокĕ илнисенчен, физкультурăн общественниллă инструкторĕсенчен, медицина работникĕсенчен т. ыт. тăваççĕ. Комиссисенче 3 çынтан пуçласа 9 çын таран пулаççĕ.

Комисси членĕсене комсомолăн пуçламăш организацисем тăратнă тăрăх физкультурăпа спорт ĕçĕсен районри комитечĕ (инспекторĕ) çирĕплетет. Физкультурăн комитечĕ (инспекторĕ) çук районсенче комсомолăн райкомĕсем çирĕплетеççĕ. Кун хыççăн комисси членĕсене физкультурăпа спорт ĕçĕсен облаçри комитечĕсен приказĕпе çирĕплетмелле.

Комиссине комсомол организацин çирĕплетнĕ председатель ертсе пырать. Комиссин пĕр членне учет ĕçĕсене туса пыма уйăрмалла. Унăн учет ĕçĕсемшĕн ответлă пулмалла.

Комиссисен ГТО комплексĕн нормисене парас ĕçе комсомолецсене тата комсомол ретĕнче тăман çамăрксене явăстарас, ГТО комплексĕн пур сыпăкĕсем тăрăх та нормăсем йышăнас, ГТО комплексĕн нормисене панисене тата ытти ĕçсене те учета илес енĕпе ĕçлемелле. Çавăн пекех, нормăсене пурне те парса çитернисен материалĕсене хатĕрлесси тата вĕсене комсомол организацинче çирĕплетнĕ хыççăн физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитетне (инспекторĕ патне) тăратмалла. Районри комитет (инспектор) çук çĕрте комсомол райкомĕсен çарпа физкультура комиссийĕсем ГТО нормисене панисен материалĕсене физкультурăпа спорт ĕçĕсен облаçри комитетне тăратаççĕ. Колхозсенчи физкультура комитечĕсем çинчен кăларнă положени тăрăх, ГТО нормисене паракансенчен физкультура коллективĕ (группи) организацилемелле.

Лайăх çулйĕршĕн кĕрешер

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районра чылай колхозсем çулйĕр строительствине хатĕрленес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем хăйсене панă плансене тултарса пыраççĕ.

Наратчаккинчи «Красное Сормово» колхозăн Сĕнтĕрвăрри çулĕ çине 135 кубла метр грави турттармалла пулнă пулсан, 140 кубла метр турттарнă. Иртнĕ çулта та «Красное Сормово» колхоз çулйĕр строительствинче лайăх ĕçлесе, преми илме тивĕçлĕ пулчĕ. Уйпӳлĕмĕрти «Опыт» колхоз çулйĕр строительстви валли материалсем хатĕрлемелли плана 100 проценчĕпех тултарчĕ. Кĕчкейри «Дружба» колхоз та хăйĕн заданине ытлашшипех пурнăçларĕ.

Ускассинчи «Сталино» колхоз аван тĕслĕхсем кăтартать. Вăл çулйĕр строительстви валли материалсем хатĕрлес тĕлĕшпе районра пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Чылай колхозсем çак ĕçре аван тĕслĕх кăтартса пынă хушăрах, районра начар ĕçлекен колхозсем те сахал мар. «Большевик» колхоз хăйĕн планне мĕнпурĕ те 6 процент, Хуракассинчи «Социализм» колхоз 35 процент, Анат-Карабашри «Волгарь» колхоз 29 процент, Вăрманкассинчи «Культура» колхоз 50 процент çеç тултарнă. Асăннă колхозсем иртнĕ çулта та çулйĕр строительствинче начар ĕçленĕ.

Районри çулйĕр пайĕ ку тарана çитсе те юлса пыракан колхозсене пулăшса пырас тĕлĕшпе нименле мерăсем те йышăнман.

А. Жукова.

Çĕнелнĕ хула

ВИЛЕЙКА. Хĕрлĕ Çар пыриччен Вилейка хулинчи пĕртен-пĕр культурăллă учреждени шкул пулнă, чи пысăк çуртсем — икĕ чиркӳ, костел, староста пӳрчĕ тата тĕрме пулнă.

Совет влаçĕ туса хунăранпа 15 уйăх хушшинче область центрĕнче Вилейка хулинче нумай çуртсем ӳссе ларнă, больница, вăтам шкул тунă, çынсене пурăнма çĕнĕрен тунă 50 çурта ĕçе янă. Автобаза туса хунă, унта кашни кунах облаçăн тĕрлĕ пункчĕсене пассажирски автобуссем туха-туха каяççĕ. Халĕ мунча, кинотеатр т. ытти тĕрлĕ çуртсем тăваççĕ.

100 пин комсомолец йĕлтĕр нормисене панă

МУСКАВ. Январĕн 20-мĕшĕнче комсомол организацийĕсем Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрçĕсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулмалли кросне тата маршлă ăмăртăва мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслемелли смотр пуçланать.

Тăтăшăнах хатĕрленнĕ вăхăтра 100 пине яхăн комсомолец ГТО комплексĕн йĕлтĕр нормисене панă, çакăнпа вара кроса хутшăнма право илнĕ.

Англипе Германи хушшинчи вăрçă

БЕРЛИН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Германи командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер Германи авиацийĕ Англи тата Атлантика океанĕ çинче разведка туса çӳренĕ. Çавăн чухне Лондонри тата Англин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă пулса тăракан объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

БЕРЛИН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Верховнăй командовани çапла пĕлтерет: океан шывĕсенче Германи карапĕ противникăн суту-илӳ суднисене (31.000 тонна) путарнă. Германи бомбардировщикĕ Ирландирен хĕвеланăç енче противникăн таварсемпе çӳрекен суднине путарнă, вăл суднăн тоннажĕ 3.500 тонна. Англин кăнтăр-хĕвелтухăç сыранĕнчи портпа чугунçул сооруженийĕсем çине бомбăсем ăнăçлăн пăрахнă. Иртнĕ çĕрле уйрăм бомбардировщиксем Англин хĕвелтухăç сыранĕнче вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă вырăнта тăракан объектсене атакăланă.

Январĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противник Хĕвеланăç Германире фугаслă тата вут чĕртекен бомбăсем пăрахнă. Вăрçă тĕлĕшĕнчен паллă вырăнта тăракан объектсене çĕмĕреймен. Сиен пысăк мар. Пĕр çын вилнĕ, виçĕ çын çăмăл аманнă. Ĕнер противникăн виçĕ самолетне персе антарнă. Германин пĕр самолет каялла тавăрăнман.

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 21-мĕшĕнче кăнтăрла Германи авиацийĕ Англин хĕвелтухăç районĕсем çинче самаях активлăх кăтартнă. Официаллă коммюникере: Германи самолечĕсем Лондон хĕррисенче, çавăн пекех центральнăй тата хĕвелтухăçри графствăсенчи чылай пунктсенче бомбăсем пăрахнă. Çуртсене кăштах çĕмĕрнĕ. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай мар.

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерĕççĕ: ĕнер противникăн уйрăм самолечĕсем Кент графствин тинĕс хĕрринчи пĕр пунктра тата Иорк графствин хĕвелтухăç пайĕнче бомбăсем пăрахнă. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем çук, сиен те пысăк мар. Противникăн икĕ бомбардировщикне персе антарнă. Январĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле хĕвелтухăçри графствăсем çине кăштах бомбăсем пăрахнă. Çынсем хушшинче вилнисемпе аманнисем çук, сиен те пысăк мар.

Дувр проливĕпе Сомма юханшывĕ хушшинчи районра Англи самолечĕсем противник территорийĕ çинчи темиçе аэродром, казармăсем тата оборона сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă, самолетсем каялла лайăххăнах тавăрăннă.

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи авиацийĕн министерстви çакăн пек коммюнике кăларнă: ыран январĕн 23-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Германи çине тата вăл оккупациленĕ территори çине пырса тапăннă. Дюссельдорфри тата Рур облаçĕнчи ытти пунктсенчи тĕрлĕ объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Çавăн пекех нимĕçсем оккупациленĕ территорири икĕ аэродром çине те бомбăсем пырса пăрахнă. Англи самолечĕсем противник суднисем çине пĕр хут çеç мар пырса тапăннă. Англин пĕр самолечĕ хăйĕн базине тавăрăнман.

Албанири вăрçă ĕçĕсем

АФИНЫ, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Греци командованийĕ çапла пĕлтерет: ĕнер пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ, вĕсем грексемшĕн ăнăçлă пулнă. 150 çынна тыткăна илнĕ тата çар снаряженийĕсем нумай туртса илнĕ. Греци авиацийĕ противникăн фронтри объекчĕсем çине ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Пирĕн самолетсем пурте каялла тавăрăннă.

Англин Грецири сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 21-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Эльбасан çине пырса тапăннă. Çар объекчĕсемпе чугунçула пысăк сиен кӳнĕ. Англи авиацийĕн çухатусем пулман.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 21-мĕшĕнче Валона çине тата Валонăран кăнтăр енчи çар лагерĕ çине бомбăсем пырса пăрахнипе 24 çын вилнĕ тата 68 çын аманнă. Валона çинелле 5 колоннăпа наступлени туса пыракан грексем войсисем хулана çурмакăшăлпа хупăрласа пыраççĕ.

Дэвол юханшывĕн секторĕнче, Поградецран кăнтăр-хĕвеланăç еннелле 7 миляра, грексем Оснада туртса илнĕ.

Центральнăй фронтра Греци авиацийĕ итальянецсен 100 грузовикран тăракан обозне пĕтерсе тăкнă, çавăн пекех тата Итали войсисем çине бомбăсем пырса пăрахнă, пулеметсенчен пенĕ. Малалла кайнă Греци войсисем 200 итальянеца тыткăна илнĕ.

АФРИКĂРИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепех çапла пĕлтерĕççĕ: январĕн 21-мĕшĕнче кăнтăрла Англи войсисем, Англин тинĕс-çар флочĕпе авиацийĕ активлăн пулăшнипе, 8 километр сарлакăш фронтра Торукăн тул енчи тата шалти оборонăллă укрепленийĕсене татса кĕнĕ. Англи войсисем малаллах кайса пыраççĕ. Вĕсем çар сыннисене тыткăна нумай илнĕ, вăл шутра Италин пĕр генералĕ пур, Тобрук портĕнче Италин «Сан Джорджо» ятлă крейсерĕ çунать.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин бронированнăй патрульнăй чăçĕсем Дерна оборонин зонинче разведкăллă рейдсем тăваççĕ. Итальянецсем хăйсен сывлăш-çар базинчен—Бомбаран тухса кайнă, вăл база Тобрукран 76 километр хĕвеланăç еннелле.

ЛОНДОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тобрука Англи войсисем илнĕ. Тобрука хирĕç пынă операцисенче Австрали войсисем те пулнă.

* * *

Тобрук Вăтаçĕр тинĕсĕн Ливи сыранĕнче вырнаçнă. Вăрçăччен унта 1.000 çын пурăннă. Бардирен Тобрук 100 километрта тăрать. Тобрук Çурçĕр Африка сыранĕнчи чи лайăх гаваньсенчен пĕри. Вăл çурмаутрав хĕрринче, çурмаутравĕ хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăç еннелле тăсăлса выртать. Гаваньĕн тăршшĕ 4 километр. Çурмаутрав тинĕсрен 40 метр çӳлте тăрать. Гавань кирек-мĕнле çанталăкра та карапсене тăма юрăхлă. Гаваньĕн тарăнăшĕ варринче 15 метр тата хĕррисенче 10 метр шутланать. Вăрçă вăхăтĕнче итальянецсем ăна тинĕс-çар тата сывлăш бази туса хунă.

Тобрук хули çурмаутравăн кăнтăр сĕвекĕнче вырнаçнă. Тобрук йĕритавра 10 километра яхăн оборона линийĕ туса тухнă. Тобрукран Джарабуб тата Сива оазисĕсем тата Дерна патне çул каять.

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Тобрукра Италин сахалтан та пĕр дивизи пулнă. Кунсăр пуçне, унта тата тепĕр дивизи юлашкисем, хула гарнизонĕ, йывăр артиллери чаçĕсем пулнă. Тобрук районне Итали войсисенчен тасатнă хыççăн, вăрçă операцийĕсем сарăлса кайнă чухне Италин Ливире пулнă мĕнпур войсисен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ çухалать. Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерĕççĕ: Хĕвелтухăç Африкăра, ыран январĕн 21-мĕш тенĕ чух çĕрле, Англи авиацийĕ Массауари электростанципе пысăк предприяти çине бомбăсем пырса пăрахнă. Кăнтăрла Абиссинири Аиша станцийĕ çине бомбăсем пырса пăрахнă. Адад çывăхĕнче противникăн салтаксем турттарса пыракан грузовикĕсем çине пулеметсенчен пенĕ.

Кăнтăр Африка авиацийĕ Явелло çине (Абиссиния) ăнăçлăн бомбăсем пырса пăрахнă. Çĕрте ларакан самолетсем çине бомбăсем тĕлех пырса ӳкнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин сывăхри Хĕвелтухăçĕнчи сывлăш вăйĕсен командованийĕ çапла пĕлтерет: ыран январĕн 21-мĕш тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Ливири Дерна портĕнчи казармăсемпе ытти тĕрлĕ çар объекчĕсем çине темиçе тонна бомбăсем пырса пăрахнă. Взрывсем пулнă, пушар ялкăшни çĕр километртан курăннă.

Çĕрле Англи самолечĕсем Мариццă çине пырса тапăннă. Бомбăсем тивнипе аэродромри çурт-йĕрсем хушшинче пушарсем тухнă.

Италин Хĕвелтухăç Африкинче Англи авиацийĕ Ададпа Ассаб çине бомбăсем пырса пăрахнă.

Англи командованийĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Çапла пĕлтерĕççĕ: иртнĕ кăсхине Англи войсисем Тобрука пĕтĕмĕшпех хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Халличен 14 пин çынна тыткăна илнĕ. Вĕсем хушшинче корпус командирĕ, дивизи командирĕ, тепĕр икĕ генерал, пĕр адмирал тата армипе тинĕс-çар флочĕн штабсенче ĕçлекен высший офицерĕсем пур Çавăн пекех тĕрлĕ калибрлă 200 оруди тата ытти тĕрлĕ çар снаряженийĕсем турттса илнĕ. Англи çухатăвĕсем 500 çынран иртмеççĕ.

Эритрейăра Англи войсисем противник вăйĕсем патне пырса çитнĕ. Унта противник войсисем Бишапа Барентуна хӳтлесе тăракан оборона позицийĕсене сыхласçĕ. Операцисем ăнăçлăн сарăлса пыраççĕ.

Абиссини фронтĕнче Метеммаран хĕвелтухăç енчи районра Англи чаçĕсем противника хĕсĕрлесе пыраççĕ.

Кенире патрульсен активлă ĕçĕсем палăраççĕ.

Англи войсисем Тобрука пырса кĕнĕ

ЛОНДОН, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерĕççĕ: ĕнер Австрали войсисем Тобрука пырса кĕнĕ. Тобрук районĕн хĕвеланăç пайĕнчи территорине противникран тасатаççĕ. Ытти укрепленисем англичансен аллинче.

Африкăра Англи çарĕпе пĕрле çӳрекен корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Италин 2-мĕш корпусĕн штабне тата темиçе пин çынна тыткăна илнĕ, орудисемпе çар материалĕсем нумай туртса илнĕ. Противник Барди патĕнчинчен нумай ытларах çине тăрса çапăçнă пулсан та, англичансен çухатăвĕсем пысăк мар.

Итали сводки

РИМ, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Итали командованийĕ çапла пĕлтерет: Греци фронтĕнче çапăçусем вырăнĕвырăнĕпе пыраççĕ, çав çапăçусенче противникăн чылай пысăк çухатусемех пулнă.

Тобрукăн укрепленисем туса çирĕплетнĕ районĕнче ĕнер пит вăйлă çапăçу пулса иртнĕ. Кăнтăрла иртсен кăна Австрали чаçĕсем Тобрука кĕрсе кайнă, унта йăлтах вут тĕртсе çунтарнă, портра тăракан «Сан Джорджо» ятлă киве суднăна взрыв туса çĕмĕрнĕ. Тобрукăн укреплени туса çирĕплетнĕ районĕн хĕвеланăç секторĕнче Итали чаçĕсем çав-çавах хирĕç тăраçĕха. Итальянецсен Тобрукри вăйĕсем пĕр дивизи, тинĕс тата чикĕри отрядсем темиçе отряд шутланаççĕ. Противник çакна лайăххăнах туйса илнĕ: унăн Тобрука атакăланă пиллĕк дивизийĕн питех те пысăк çухатусем пулнă.

Керу зонинче (Эритрея) противник атакине сирсе пăрахнă. Противникăн чылай пысăк çухатусемех пулнă.

Эгейски тинĕс таврашĕнче противник самолечĕсем итальянецсен сывлăш базисенчен пĕрин çине бомбăсем пăрахма хăтланнă, анчах ĕç тухман. Унăнне икĕ самолет персе антарнă.

Январĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Катания тата Сицилири тепĕр пункт çине бомбăсем пăрахнă,) анчах нименле результат та паман.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центральнăй Китайра. Юлашки куненче Хубэй провинцийĕн центральнăй пайĕнчи Ичан районĕнче пысăк çапăçусем сарăлса кайнă. Январĕн 16-мĕшĕнче ирхине Японин 5 пин çынлă войсисем Ичан патĕнчен хĕвеланăç еннелле наступлени тума пуçланă. Японецсене 10 самолет путăшса пынă. Китай войсисем японецсене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Январĕн 16-мĕшпе 17-мĕш хушшинче çĕрле çĕрĕпех çапăçнă хыççăн, японецсене çĕнтерӳсен хаваслăхĕпе пурăнать. Ачасем çĕршывра пыракан çĕкленӳ айккинче тăрса юлма пултараймаççĕ. Куна эпир Тимурпа унăн командин вăйăсенче куратпăр. «Вăйăсем» тени тĕрĕсех те пулмасть, мĕншĕн тесен, ку вăйăсем çав вăхăтрах мухтавлă та чаплă ĕç пулса тăраççĕ. Тимур команди Хĕрлĕ çар боецĕсемпе командирĕсен çемьисене вăй çитнĕ таран пулăшса тăни — ку ĕнтĕ вăйă çеç мар, кунта вăйăпа мухтавлă ĕç уйрăлми çыхăнса тăраççĕ.

Акă поселокра темĕнле тĕлĕнмелле ĕçсем пĕрин хыççăн тепри пулă-пулă пулса иртеççĕ. Красноармеец амăшĕн килкартинче ларакан кадкана такам кулленех шыв кӳрсе тултара-тулта лартать. Çак хĕрарăм, кашни ирех вылăхсене ĕçтерме шыва пысăк асаппа кӳрекенскер, кадка хăй тĕллĕнех шывпа тулса ларнинчен тĕлĕнет. Ватă мучин килкартинче сапаланса выртакан вутăсене такам шăршана купаласа лартнă. Тепĕр красноармеец амăшĕнне çухалнă качакине такам шыраса тупса килне пырса янă. Юлашкинчен такам, темĕнле тĕлĕнмелле хăватпа, сад-пахчисене çаратса çӳрекен хулиганла ачасене тытса сарая хупса хунă. Çаксем пурте Тимурпа унăн командин ĕçĕсем.

Сад-пахчинче сарай тăрĕнче Тимурпа унăн командин штабĕ вырнаçнă. Кунта вĕсем мĕн кирли пурте пур: тĕрлĕрен сигнал памалли приспособленисем, дозор службин хатĕрĕсем, телефон çыхăнăвĕ т. ыт. те. Кунта Тимур хăйĕн команди валли ĕç планĕсем хатĕрлет, распоряженисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Тĕплĕн шухăшласа тунă план, çирĕп дисциплина, команда капитанне—Тимура вĕçĕмсĕр пăхăнса тăни, ун приказĕсене пĕр иккĕленмесĕр пурнăçа кĕртни — çаксем ачасем мĕн тума палăртнине пурне те ăнăçлăн туса пыма мăн парааççĕ.

Тимурпа унăн команди тума пултарайман ĕç çук. Акă команда членĕ, полковник хĕрĕ Женя, аппăшĕ улталаса хăварнипе, хăйĕн юратнă ашшĕне курмасăрах тăрса юлма пултарать. Унăн ашшĕ çула май темиçе сехете кăна хулари хваттерĕнче чарăнса тăрать. Женян мĕнле пулсан та хăйĕн хаклă ашшĕне кайса курмаллах. Анчах мĕнле каясха? Çĕрле. Юлашки поезд иртсе кайнă ĕнтĕ. Çуран кайма инçе. Çитменнине тата Женя ответлă дежурствăра: вăрçăра вилнĕ лейтенант арăмĕ ăна хăйĕн пĕчĕк хĕрне вăхăтлăха пăхма хушса хăварнă. Тимур умĕнче пысăк задача: унăн Женяна, дежурствăран уляштарса, халех хулана леçсе хăвармалли май тупас пулать.

Тимур нумаях шухăшласа тăмасть. Вăл часах решени йышăнать. Ним тума та çук. Ун пек туни лайăх маррине пĕлсех Тимурăн ирĕксĕрех çăра ватса сарайĕнчен пиччĕшĕн мотоциклетне илме лекет. Команда членĕн Колян тутлă ыйăха татсах Женяна улăштарма дежурствăна тăма лекет. «Ним тума та çук. Дисциплина» — тет Коля, пысăк çын пекех.

Тимур мотоциклпа чупма матур пĕлет. Акă полковник хăйĕн аслă хĕрĕпе Ольăпа хулари хваттерне Женя килейменни çинчен хуйхăллăн каласса илет. Полковникăн кĕçех каймалла ĕнтĕ. Ана хăйĕн чаçĕ, хăватлă танксен команди урамра кĕтсе тăрать. Çак вăхăтра тусанланса пĕтнĕ Женяпа Тимур кĕрсе тăраççĕ. Телейлĕ Женя хăйĕн нумайранпа курман юратакан ашшĕ ытамĕнче. «Атте, ку манăн савнă, лайăх юлташ, Тимур», — тесе паллаштарать ашшĕне Женя.

Картина ачасем Гараев инженера Хĕрлĕ çара мĕнле ăсатнине кăтартнипе пĕтет.

Фильмра çитменлĕхсем те пур. Вĕсенчен пĕри—çитĕннисене ытла та питĕ çиелтен кăна кăтартни. Ку ĕнтĕ ача-пăча фильмисенче час-часах пулакан çитменлĕх. Фильмра çитĕннисен сăн-сăпатне сюжет тĕлĕшĕнчен çеç кăтартса панă, вĕсене фильмри ача-пăча сăн-сăпачĕсемпе çыхăнтарман.

Çапах та «Тимур и его команда» фильма ачасем кăна мар, çитĕннисем те пысăк интереспа пăхĕç. Ку фильм ача-пăча картинисем хушшинче чи лайăххисенчен пĕри пулса тăрать.

П. ВАСИЛЬЕВ.

США правительстви СССР тĕлĕшпе тунă „моральнăй эмбаргона“ пăрахăçа кăларнă

ВАШИНГТОН, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). США-н государство департаменчĕ Совет Союзĕ тĕлĕшпе тунă «моральнăй эмбаргона» пăрахăçа кăларни çинчен пĕлтернĕ.

Çакна май государство департаменчĕ государство секретарĕн Уэльсăн заместителĕн çыруне пичетлесе кăларнă, вăл çырăва ССР Союзĕн Вашингтонри полпречĕ Уманский юлташ патне янă. Çырура çапла каланă: «Нумаях пулмасть пирĕн хушăмăрта пулса иртнĕ калаçусем хыççăн, Сире савăнăçлăн пĕлтеретĕп: Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çапла йышăнчĕ: президент 1939 çулти декабрĕн 2-мĕшĕнче пичет представителĕсене панă заявление кăтартса панă политикăна, — вăл политикăна «моральнăй эмбарго» тесе калаççĕ, — урăх ĕнтĕ Совет Союзĕ тĕлĕшпе пурнăçласа пымасть. Вăл решение Америкăн интересленекен промышленникĕсемпе экспортерĕсене пĕлтереççĕ».

Японири Мацуо Докиярд фирми Совет торгпредстви умĕнчи парăма тӳлесе татнă

ТОКИО, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Мацуо Докиярд фирми Совет Союзĕн Токиори торгпредствине парăма кĕни çинчен тăракан ыйтăва йĕркелесе яни çинчен Совет Союзĕпе Япони хушшинче 1941 çулти январĕн 20-мĕшĕнче тунă килĕшӳ тăрăх, çӳлте асăннă фирма 1936 çулта илнĕ 1.647.750 иена аванса торгпредствăна тавăрса панă тата, кунсăр пуçне, 300.000 иена чухлĕ неустойкăна витмелли пушшалнăй суммăна тӳленĕ.

Францире коммунистсене хĕсĕрлеççĕ

ВИШИ, январĕн 23-мĕш. (ТАСС). Францин шалти ĕçĕсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Францири компартине салатса янă хыççăн полици 6.084 арест тунă, 15.534 коммуниста судăпа, коммунистсем ертсе пыракан 970 организацине салатса янă, 384 хаçата хупнă тата компартин 2.006 активистне тĕрмесене хупса лартнă.

Мацуока каланă сăмах

ТОКИО, январĕн 23-мĕш. (ТАСС) Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин парламенчĕн 76-мĕш сессийĕнче ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мацуока Японин тулашри политики çинчен сăмах тухса каланă. Япони правительствин тулашри политики, тенĕ Мацуока, виçĕ государство пакчĕ çинче никĕсленсе тăрать, вăл пактра каланă тăрăх, пакт участникĕсем политикăллă, экономикăллă тата çарлă пур средствăсемпе те пĕр-пĕрне пулăшу пама пулаççĕ. Японин «Аслă ХĕвелтухăçАзи сферинчи» тĕллевĕсем çинчен каланă май, Мацуока Японипе Манчжоу-Го тата Ван Цзин-вейăн Нанкинри «правительстви» хушшинчи отношенисем çинче чарăнса тăнă. Чан Кай-ши правительстви халиччене Японине хирĕç кĕрешни, тенĕ Мацуока, Китай США-па Англирен пулăшу илме шанса тăнинчен килет. Мацуока Японипе Голланди Индийĕ хушшинчи экономикăллă калаçусем мĕнле пыни çинчен тата Японипе Франци Индо-Китайĕ хушшинче пулса иртнĕ калаçусем çинчен пĕлтернĕ, вăл калаçусенче Япони войсисене Франци Индо-Китайĕн территорийĕ çине кĕртесси çинчен килĕшӳ тунă. Японипе Таи хушшинче туслă отношенисем пуррине паллă туса, Мацуока çапла каланă: Франци Индо-Китайĕпе Таи чиккинчи хĕçпăшаллă конфликт Японине интереслентермесĕр тăма пултараймасть. Вăл Франци Индо-Китайĕн составне кĕртнĕ территорине Таи каялла тавăрма пултарасса танса тăни çинчен каланă.

Мацуока Японипе Австрали пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яни çинчен пĕлтернĕ. Юлашки вăхăтра, тенĕ малалла министр, Кăнтăр Америкăри чылай çĕршывсемпе, вăл шутрах Бразилипе Япони хушшинчи онтошенисем чылаях çирĕпленнĕ.

Унтан Мацуока Японипе Совет Союзĕ хушшинчи отношенисем çинчен каланă. Японипе ССР Союзĕ хушшинчи дипломатиллĕ отношенисем малашне те халичченхи пекех юлсан, çакă вăл кăмăллă мар япала пулнă пулĕччĕ, тенĕ Мацуока. Хальхи вăхăтра пĕр-пĕрин хушшинчи разногласисене сирсе ярас тесе тата, май пулсан, дипломатиллĕ отношенисенче тĕпренес тата тарăна каякан улшăнусем тăвас тесе, пĕтĕм вăйран тăрăшатпăр. Ку ыйтура Германия та, çавăн пекех Италия та Японипе пĕр евĕрлех шухăшлаççĕ. Хальхи вăхăтра эпир Манчжоу-Гопа Тулашри Монголи хушшинчи чикĕне демаркаци тăвасси çинчен, пулă тытасси çинчен тата Японин Çурçĕр Сахалинри концессийĕсем çинчен калаçусем ирттеретпĕр. Пулă тытмалли çĕнĕ конвенци туса хатĕрлеме Японипе Совет Союзĕн представителĕсенчен комисси тăвасси çинчен, çавăн пекех пулă тытма 1928 çулта тунă конвецине 1941 çулти декабрĕн 31-мĕшчен тăсасси çинчен килĕшӳ тунă та ĕнтĕ.

Мацуока виçĕ государство пакчĕн 5-мĕш пункчĕ çинчен — Берлинра тунă пакт Совет Союзне хирĕç пымасть тесе кăтартса паракан пункт çинчен аса илтернĕ. Эпир пĕтĕм чĕререн шанса тăратпăр, тенĕ Мацуока, ССР Союзĕ Япони ĕмĕчĕсене ăнланса илĕ, пĕр-пĕрне уступкăсем пама шутлакан тата пĕр-пĕрне ырă сунакан икĕ çĕршыв хăйсен отношенийĕсене лайăхлатма пултарĕç.

Малалла Мацуока Японипе Англи тата Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи тулашри суту-илӳ çинчен, Японипе США хушшинчи политикăллă отношенисем çинчен калаçусем. США Японине çитĕлĕклĕ таран лойяльно пăхманнине кăтартса паракан фактсем пур, тенĕ Мацуока, уйрăмăн илсен, США чылай таварсене Японине сутма чарчĕ. Пĕрлешӳллĕ Штатсем, тенĕ Мацуока, çапла шутлаççĕ пулмалла: пирĕн нации оборонин линийĕ Хĕвеланăçĕнче Лăпкă океанăн хĕвелтухăç бассейнĕ тăрăх кăна мар, Китайпа Кăнтăр тинĕсĕсем таранах иртсе пырать, теççĕ пулас. Çак позици, Мацуока шутлана тăрăх, пĕтĕмĕшле мире çирĕплетме пулăшмасть. Эпир шанатпăр, тенĕ Мацуока, США «сывхарса килекен кризиса чарса лартас тĕлĕшпе» мĕн кирлине йăлтах тăвĕ.

Юлашкинчен Мацуока çапла каланă: тĕнчери обстановка татах та ытларах йывăрланас çулпа ataланса пыни уçăнах курăнса тăрать. США Европăри вăрçăна явăçса каяс пулсан, ун чухне вăл вăрçа Японин те хутшăнмалла пулса тăрĕ, çапла килсе тухсан вăрçă пĕтĕм тĕнчипех сарăлса кайĕ. Хальхи вăрçăна май килнĕ таран часрах чарса лартма тăрăшас пулать, тенĕ Мацуока.

Франци Индо-Китайĕпе Таи хушшинчи вăрçă

КЛЕРМОН-ФЕРРАН, январĕн 21-мĕш. (ТАСС). Гавас агентстви Виширен çапла пĕлтерет: Францин 5 çар карапĕ Таин икĕ карапĕпе пĕр миноносецне пысăк сиен кӳнĕ. Çак карапсем Кох Чанг утравĕ патĕнче тăнă. «Ламот-Пике» крейсер, «Дюмон д'Юрвиль», «Адмирал Шарне», «Таюр» тата «Марн» каноперкăсем январĕн 17-мĕшĕнче пиртех те йывăр условиленче çапăçăва кĕнĕ, мĕншĕн тесен Кох Чангри карапсем тăмалли вырăна рифсем хӳтлесе тăраççĕ. Франци карапĕсем Кох Чанг патне çĕрле пынă, унти карапсене тул çутăлса килнĕ вăхăтра атакăланă, тесе шутлаççĕ. Французсен нименле çухату та пулман.

НЬЮ-ИОРК, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Бангкокран пĕлтернĕ тăрăх, Таи верховнăй командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Франци Индо-Китайĕнче вăрçă ĕçĕсем пĕтĕм фрончĕпех, чикĕ тăрăхĕпе, сарăлса кайнă. Франци Индо-Китайĕн войскисен атакисене сирсе пăрахнă. Таи самолечĕсем французсен çар транспорчĕсем, казармăсемпе аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă.

Илнĕ сведенисем тăрăх, французсем Сисофон патнелле чакнă. Таи войскисем çав хулана йĕритаврa хупăрласа илме хатĕрленеççĕ.

Франци самолечĕсем Таири чылай пунктсем çине бомбăсем пăрахнă.

Ассошиэйтед пресс агентствин Сайгонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Таи войскисем Комбоджа провинцийĕн çурçĕр пайне кĕрсе кайнă, унта вĕсем темиçе километр малалла кайнă.

Икĕ енĕ те Меконг юханшывĕ урлă Паксе çине персе тăраççĕ. Франци Индо-Китайĕн тата Таи войскисен те пысăк çухатусем пулнă.

Французсем: иртнĕ эрнере вĕсем Таин виçĕ танкне çĕмĕрсе тăкнă. Франци Индо-Китайĕн зенитнăй артиллерийĕ Таин пиллĕк самолетне персе антарнă, тесе пĕлтернĕ.

ШАНХАЙ, январĕн 22-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франци Индо-Китайĕн губернаторĕ Деку январĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă сводкăра çапла каланă: Таирен илнĕ сведенисем тата Бангкокран радио тăрăх пĕлтернĕ тăрăх, Таи правительстви Индо-Китайпа тӳрремĕнех контакт тума май пур, тесе шутлать.

К. В. Иванов çинчен

Советлă Эстонире тухса тăракан «Вийснурк» ятлă журналта Н. Чертова юлташ Чăваш литературин классикĕ К. В. Иванов поэт çинчен сырнă статья пичетленсе тухнă. **Н. В.**

Хор кружокĕ организацилерĕç

Шăхасанти суту-илӳ работникĕсем хор кружокĕ организацилерĕç. Унта сельпора, райпотребсоюза тата столовăйĕнче ĕçлекенсем пурĕ 20 çын ытла çӳреççĕ. Кружокăн занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыма тытăнчĕç. Ана Шăхасанти вăтам шкулта вĕрентекен И. Игнатьев учитель ертсе пырать.

Вас. Яковлев.

Лекци

Паян, январĕн 25-мĕшĕнче, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн парткабинетĕнче философи тăрăх вулакан лекцисен циклне итлекенсем валли **«Борьба материализма и идеализма в эпоху Возрождения»** темăпа лекци пулать. Лектор — **Германов** юлташ.

Лекци каçхине 8 сехетре пуçланать. Итлеме абонементпа кĕртеççĕ.

Абонемент карточкине парткабинетра ирхине 10 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен туянма пулать.

Парткабинет.

КИНО

„Тимур и его команда“

Совет ачисен героикине, вĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсене тулли тата тĕрĕс кăтартса паракан фильмсем пирĕн сахал. Ку тĕлĕшрен совет кинематографийĕ умĕнче калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ.

Пирĕн ача-пăчасем — активлă тата яланхи кинопăхакансем. Кино вĕсен пурнăç-йăлине тарăн та çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Хулара та, ялта та туллиех кинора ача-пăча кĕпĕлтетнине эпир кашни кунах куратпăр. Çĕнĕ картинăсене пуринчен ытла пирĕн ачасем пысăк хаваслăхпа кĕтсе тăраççĕ. Экран çине çĕнĕ картина кăларни вĕсемшĕн событи пулнăн туйăнать.

Анчах час-часах, ăшшăн кĕтсе илнĕ картинăна пăхнă хыççăн, пирĕн ачасем киноран кăмăлсăр тухса каяннине те тĕл пулма пулать. Ачана кăмăла кайма пултарайман, унăн психологине вырнаçма пултарайман картинăсем пирĕн сахал мар.

Юлашки вăхăтра «Союздетфильм» киностудийĕ çак çитменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе чылаях çитĕнӳсем турĕ темелле. Ку енчен уйрăмах «Тимур и его команда» ятлă çĕнĕ фильма кăтартса памалла. «Тимур и его команда» совет ачисем çинчен калакан картина. Ку фильма писатель-орденоносец Гайдар сценарийĕ тăрăх тунă. Режиссер Разумный. Фильмри пур палăрах рольсене те ачасем выляççĕ.

«Тимур и его команда» фильмра совет ачисен сăн-питне уççăн та тĕрĕс кăтартса панă. Есченлĕх, туслăх, тăван çĕршыва вĕçĕмсĕр парăнни, ăна чунтан юратни—çаксем пурте совет ачисен хăйсен кулленхи пурнăçĕпе уйрăлми çыхăнса тăракан пахалăхсем. Ку пахалăхсем вĕсен паян

Ответлă редактор Р. О. МАЛЮТИН.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—57, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97 экономика пайĕн—0—88, çыру русем. рабселькорсен пайĕн —2—30, «Капкăн» тата «Есхĕрарăмĕ» журналĕсен—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2246.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 2. Ф. Б. 9×84 п. л.